**Михаил Сунтал**

# ÇĂЛĂНĂÇ УТĂМĔСЕМ

**Шупашкар 2009**

ББК К84.09 (Чув)6-51
УДК 89471.344)
С100

Сунтал Михаил
Çӑлӑнӑç утӑмӗсем. Сӑвӑсен пуххи. Шупашкар, 2009.
– 105 с.

Ку сӑвӑсене автор, пӗр пӗтӗмӗшле илсен, 2009-мӗш çул тӑршшӗпе çырнӑ. Вӑл ыти кӗнекесем пекех çут çанталӑк тӑхрисене сӑнласа парать, çав вӑхӑтрах юрату, туслӑх, пӗр-пӗрне пулӑшни çинчен калать. Кӗнекери кашни сӑвӑ çаври хӑйне майлӑ çӑлӑнӑç утӑмӗ пек курӑнать.

М. Сунтал, 2009

***

Кил картинче пĕр ватă тополь
Ларатчĕ эп ача чухне.
Пĕрле тăрса çаптарнă фото
Тухса тăрать халь куç умне...
Пĕр айккинчен çĕрме пуçланă,
Тăрне те татнă, курăнать.
Ватта кайса йăлтах шуралнă
Атте пекех вăл туйăнать.
Пĕр каçхине çил-тăвăл карчĕ
Хура шăналăк тӳпере.
Ват йывăçа вăл йăвантарчĕ –
Ирччен чĕтрерĕ ман чĕре...
Вăл Улăп пек пăхса ларатчĕ.
Халь пĕчĕк ача пек выртать.
Эп ун çинчен инçе курсаттăм –
Халь ма вара куç хупăнать?
Ват тополе касса вакларĕç,
Вутта çеç юрăхлă тесе.
Кил картине тикĕслесе
Тымар таран алтса кăкларĕç...
Çул хыççăн çул пит хăвăрт иртрĕ.
Эп тухса кайрăм тĕп килтен.
Нумай çĕршыв, ял-хула витĕр
Килсе çитсессĕн... Çав тĕлтех
Пăхса тăратăп куç илмесĕр...
Кил картинче пĕр çамрăк тополь –
Вăл курăнать ытла пит тăпăл.
Хăй хальлĕнех, никам чĕртмесĕр,
Ват йывăçа ас илтерсе,
Çил хыççăн кайăк пек вĕçсе,
Тин ӳссе ларнăн туйăнать,
Çут çулçипе шапăлтатать...

* * *

Ир çинчи хĕвел
Вăрттăн шухăшлă хĕр пек
Хĕрелсе пăхрĕ.
Шурă юра та хĕрлĕ тĕс çапрĕ...
Юнпа сĕт хутăш ĕçсе вăй пухнă паттăр пек
Хĕл хăйĕн вăйне ниçта кайса хураймасăр
Шурă шăлĕсемпе шатăртаттарса илчĕ...
Эпĕ чăтаймарăм, çĕлĕке пусарах лартрăм та,
Кукăр-макăр сукмакпа васкарах утрăм...

* * *

Тăван кил те темшĕн ют.
Ачи-пăчи çумра çук.
Çакă тĕнче умĕнче
Çын пулмашкăн вăйăм çук...
Тен, чунăма вăрманта аташтарса хăвартăм?
Тен, ăш пите сив шывпа çуса йăлтах çухатрăм?
Тăван çавна сисинччĕ,
Пĕр-ик сăмах калинччĕ!
Kaç пулттипе шăпчăк пек
Ши! шăхăрма пĕлмерĕм.
Пурăнма та ирĕк пек.
Пурпĕр ырă темерĕм...
Тен, çавăнпа иленмест чĕкеç аслăк тăррине?
Тен, çавăнпа ăнланмасть чĕре чăваш юррине?
Тăван çавна сисинччĕ,
Пĕр-ик сăмах калинччĕ!
Кӳршĕ патне каçнă чух
Çул хĕррипе çӳллĕ çум.
Пĕрле ларма пит аван –
Юхать анчах çутă кун...
Тен, савăнса пурăнма пулчĕ мана пит кичем?
Çум çумлама тытăнсан алла чикет чĕр пиçен...

Тăван çавна сисинччĕ,
Пĕр-ик сăмах калинччĕ!

* * *

Енчен те эс, ывăлăм ман,
Аçу чĕлхипе пуплеместĕн,
Çынна ыр тума пĕлместĕн...
Ӳкет пуç çине пушă пурнăç тени,
Кулса та канса иртет самани.
Пĕр пĕрчĕ те пуль хушăнмасть пин çумне...
Туйса-и тата аннӳ хуйхине?
Аннӳ, Çĕр-Аннӳ тăрмалать хăй питне.
Çырма та çатра пĕтерет пĕтĕмпех.
Вăрман хывса çапĕ хăй кĕрĕкне...
Тăрса та юлатпăр йĕрĕх пекех.
Пĕр çынсăр юлсан хуралтă-çуртсем,
Писет кăвакарчăн хăй йăвинчен.
Йăвасăр йăмра ларать тайăлса...
Никам та утмасть ун тавра савăнса.
Аннӳ пукане пек ӳксессĕн ӳпне
Çĕршывăм кăларĕ асаплă сасне.
Эс тăрăн хытса, тен, çавăн чухне
Аса илеймесĕр аçу сăмахне...
Енчен те эс, ывăлăм ман,
Аçу чĕлхипе пуплеместĕн,
Çынна ыр тума пĕлместĕн...

* * *

Чăвашăн чунĕ упранать
Чĕкеç чĕлхийĕ вĕçĕнче...
Сăвă пулса вăл шăранать
Тăван сăмах хуранĕнче.

Уйсем çине çил ачилле
Вăл хумлăн-хумлăн ывтăнать.

Хура вăрманăн кĕввине
Куккук пулса, тен, авăтать?

Пĕр савăнса, пĕр хурланса
Сăнать чăваш хăй кун-çулне.
Тăрать вăрманĕ ватăлса –
Тăрри каять хĕвел патне...

Шутлать куккук çын шăпине.
Пĕр чарăнать, пĕр авăтать...
Телей килет пуç тӳпине –
Мĕн-ма чĕре ман ыратать?

Мĕн-ма тăратăп пуç тайса
Вĕçет куккук куккукласа...
Юлать ман чун тăвăрланса –
Тӳпе пек тарăн та таса!

* * *

Çурхи каç çывăрать кайăк майлă.
Сар чечек куçне хупрĕ пулас.
Тĕнчене тăнлама пуçа тайрăм –
Пĕр кана манăçать ялти сас.

Шăхăрать шăплăх – чунлă тейĕн.
Шăхăрать уçлăх пек çурхи каç!
Тем пекех итлесен те илтеймĕн
Сассине. Вăл ытла та мăнаç.

Эпĕ юлтăм пулех хăлхасăр.
Шăхăрать шăплăх – пуççăр пекех!
Тăчĕ уйăх пĕр кас хускалмасăр...
Кăкăрта канăç çук – текех!

* * *

Куç илейми пăхатăп.
Тăранайми сывлатăп.
Ытла та тутлă,
Ытла та тарăн...
Пĕрре те пулин санпа тĕл пуласчĕ.
Хĕвел çутине ывçăпа çеç тытасчĕ.
Вара?
Куçăма хупăттăм.
Сывлайми тăрăттăм.
Ытла та тутлă,
Ытла та тарăн...
Пĕрре те пулин сана ыталасчĕ.
Ăшă хĕвеле чечек пек туясчĕ.
Вара?
Чунăма шăратăттăм.
Кăкăра кантарăттăм.
Ытла та тутлă,
Ытла та тарăн...
Çук, санпа пĕрре те тĕл пулаймарăм.
Хĕвел те хула хыçне анчĕ...
Ытла та тутлă,
Ытла та тарăн...

* * *

Çырмара пĕр шуйттан та юлман.
Пĕр хăрушлăх та çук таврара...
Çухалса илтĕнет ăшăмра:
«Эп çунатăп, тăван!»

Чĕрене çавă сасă йĕплет.
Куççульпе тулли куç йĕпенет.
Паяна çитиччен хур курман...
«Эп çунатăп, тăван!»

Пурччĕ манăн тахçан пĕр тăшман.

Тек туптаччĕ чунри чăтăма.
Халь тесен эп кулатăп кăна:
«Эп çунатăп, тăван!»

Çăмăл мар пуш пуçпа пурăнма.
Çăмăл мар куç хупса савăнма.
Илтĕнет кулă витĕр таçтан:
«Эп çунатăп, тăван!»

* * *

Çĕр çийĕпе вĕçме пит лайăх
Турат пекех вăшăлтатса.
Мĕн каласа сана хăварчĕ
Çав çил ачи туратланса.
Çил ачипе калаçрăн эсĕ,
Юманăм, çил пек вĕçнĕçĕм.
Пĕрре унта, тепре суллантăн –
Юман тăрри вĕçет татах!
Вĕçсе каять çĕр çийĕ тăрăх
Кăвак юман пĕр кайăк пек.
Кам ун тăрне чупса хăпарнă
Çавна пĕлет пĕр турă пек.
Юман тăрри тĕнче тăрри пек,
Пăхсан куран пур таврана.
Ахальтен мар пуль пур чăвашĕ
Юман тавра пуçтарăнса
Ăна пуç çапнă, асапланнă
Турă пекех çак çĕр çинче.
Вăхăт çитсен те йăвантарнă
Ват юмана çак çĕр çине.
Йăваннă хăй те йывăç евĕр,
Юман пек выртнă лăпланса.
Тен, çавăнпа пĕр турат евĕр
Тăратăп эпĕ шăхăрса...

***

Çĕн çул хапхине те уçса
Кĕретпĕр эпир юрласа.
Юрри темĕнле тутарла,
Пăхаççĕ куççем урăхла...
Шур юр çукалать тепĕр чух...
Кĕртсем пысăк мар та пĕрех
Кĕтсе илекен урăх çук.
Картишĕ пушах, пĕлтĕрех.
Кăçал та çапла-ши пулать?
Çулталăк каллех пушанать.
Хуралтăра çук чăх-чĕпсем,
Памаççĕ пĕр сас вылььăхсем...
Уйра та пĕр кайăк та çук!
Çил çеç шăхăрать майĕпен.
Ăçта эс, хĕртсут, кĕтме тух.
Тен, эс те пире кĕтмен...
Паратпăр сана кучченеç
Пĕр çăкăр татки. Пĕр апат
Пире хамăра та çитет.
Выçса та вилместпĕр пулать.
Çĕн çул шăхăрать. Ах, Турах!
Шăнса вилес марччĕ татах!
Пуш-пушă килте аван мар
Ахаль çеç ларма. Салтăнар!
Хутса та ярар кăмака.
Çĕн вут хуçалантаăр унта.
Киле ăшă кĕтĕр кăна
Хĕртсурчĕ тухать те вара!

***

Тĕлĕнмелле пĕр пысăк чăнлăх
Пурах пекех ман арăмра.
Пуçне пĕксе питех те тăнлă

Ертсе пырать хуçалăха...
Тен, йывăр та ăна, пĕлместĕп,
Мана пĕрре те каламан.
Ир тăрсанах пĕр-ик икерчĕ
Вăл пĕçерет ырă сунса.
Пиллештеретпĕр те пуçлатпăр
Кăштăртатма хуçалăхра.
Йăлтах вĕт хамăрах тăватпăр
Килне-çуртне те алăпа...
Ак, вăхăт çитрĕ, ӳссе ларчĕ
Пĕр пĕчĕк çурт пĕр урамра.
Икĕ енчен те çил хупларĕ,
Памарĕ лăпкăн пурăнма.
Пĕрех, çил вĕртĕр те кашлатăр,
Тустартăр лăпкă тĕнчене.
Пӳрт çумĕнчи лаштра йăмра
Пире анчах çăлса хăвартăр,
Эпир ĕçленине кура...
Пуçа пĕксе ĕçлет ман арăм –
Ун чунĕ çавăнпа таса!
Мĕн чухлĕ курнă пуль асапĕ,
Ăна халь пулăшать чăтма.
Чăтах, аппа, чăтах, хĕртсуртăм,
Куç умĕнчи çак турăш пек.
Мĕн чухлĕ пуль сана хур тунă –
Эс çавăн чухлĕ хитререх!

***

Сана эп таçта та куртăм.
Ăçта перĕнмен пуль аллу!
Татах, ак, тăватпăр пĕр утăм.
Кĕтет, тен, пире уйрăлу.
Часах 40 çул пĕрле çитĕ
Пĕрле пурăнни, мĕн тăван.
Тен, çавăнпа арăм пичĕ

Çиçет уйăх пек ăнсăртран.
Çиçет те, ак, пĕлĕт хупланăн
Ӳкет çакă пурнăç мĕлки.
Мĕн чухлĕ пуль эсĕ хăватлăн
Сирсе çав хура пĕлĕте.
Чăнах та, чун вăйĕ сан пысăк.
Ӳстертĕн чăтса ача.
Анчах параймарĕ вăл усă,
Çухалчĕ таçта аякра...
Тен, сан упăшку та усаллăн
Пăхса çеç тăрать сан çине.
Пĕрех тепĕр чух алла-аллăн
Вăл утнă санпа ир çинче.
Нумай пулнă пулĕ хăлтăк.
Пурнан пурнăçра унсăр мар!
Халь тин тепĕр хут эсĕ йăлтăр
Кулса çеç илен уйăх пек.

***

Тахçан пĕчĕк чух çĕн çул умĕн
Кĕтеттĕм телей килессе.
Ак, çитрĕ пулех çĕн çул кунĕ –
Телейĕ вара кĕтесре!
Мĕн-ма-ха ăна айăплană,
Мĕн тунă вăл тĕрĕс мар?
Телей килесрен хăрană
Лараççĕ çынсем ахаль мар.
Хăрană пуль те кăларнă
Тем чухлĕ эрех-сăра.
Эрех ĕçнĕçем тăпăлтарнă
Теллейĕн çӳçне, апăрша.
Телей пит кĕресшĕн пулсаччĕ,
Ларасшăнччĕ çын хушшине.
Халь ĕнтĕ, капла, мĕн-ха пулчĕ,
Тăрать вăл пĕччен хурланса.

Хурланчĕ-хурланчĕ те кайрĕ
Ытти çынсене шырама.
Сăраллă çынсем вара юлчĕç
Сĕтел хушшинче ахăрса.

* * *

Мĕн-ма аса килчĕ пулĕ
Таçти аякри пĕр сăнар.
Выртать аякка пурнăç çулĕ –
Унпа эп утатăп пĕрмай.
Çав çул çинче эпĕ куртăм
Таса та черчен чечеке.
Нумайăш ăна курнă пулĕ,
Тен, татнă та пуль ир çинче?
Çук, эпĕ татма та пĕлмерĕм.
Пăхса иртсе кайрăм пĕччен.
Мĕн-ма-ха ăна эп илмерĕм,
Пулатчĕ манпа – пĕтиччен.
Типетчĕ те пĕтĕччĕ хăвăрт,
Эп çеç киленеттĕм унпа.
Юлатчĕ унран пĕр хăрăк
Турат пек кăна хыт-хура!
Юрать эп ăна татмарăм,
Ӳсет пуль-ха халь çавăнтах.
Иртен-çӳрене савăнтарнăн
Пăхать хĕвеле тайăлса...

* * *

Кам чунĕ манра вылянать-ши
Ниçта çухалмасăр ир-каç?
Татах та манра тупăнать-ши
Çак кун пурăнмалăх вăй-хал?

* * *

Пĕр куç йăлтăртатрĕ –

Çуталчĕ çути.
Таçтан вăл кăтартрĕ
Пĕр пурнăç утти.
Утать пек пĕр çамрăк,
Пĕр çамрăк ача.
Ун çулĕ çуталчĕ
Çав çутăпа.

***

Никам та çук ман çул çинче.
Пĕччен утатăп эпĕ.
Йĕри-тавра ик айккинчен
Усал утать пек тепĕр.
Эп хăрамастăп усалтан.
Усал халь ман юлташăм.
Унпа эп калаçса пырсан,
Вăл хăй те час çынланĕ.
Никам та çук ку тĕттĕмре.
Пĕр эпĕ çеç пĕччен.
Хамра шыратăп тепĕре –
Юлташсăр вĕт кичемлĕ.
Ырри те, усалли те
Манрах пурнаççĕ пулĕ,
Эп çавсемпе калаçнине
Илтет пуль пурнăç çулĕ?..

***

Пурнăç тени тĕлпулуллă.
Тĕл пултăн пулсан Туррупа
Пурнăç пулать татуллă!

***

Тута калуллă предложени
Сăмахсăрах темле калать.
Çав тутапа эс килĕшетни –

Тута тени вăл улталать!

Тута кулать асăрхануллăн.
Пулма ыйтать кăшт туслăрах.
Ан, тивĕр, тет, мана. Эп тутлă,
Юратăва пултарнăран.

Тута кулать айваннăн пек те,
Анчах шалта хăюллăх пур.
Çын çын патне утса çитет те
Кулса пăхать малтан тем чул.

***
Тăван чĕлхепе пуплемесĕр
Пĕр кун та ан ирттĕр урăх.
Унсăр эс юлăн чĕлхесĕр,
Пулăн, чăнах та, сурăх!

Тахçан çамрăк чух аванччĕ.
Нихçан чăвашла калаçман!
Шутланă эпир, халь вырăс
Хутать тĕнчере курăс.

Тен, çавăнпа та хутмарăм,
Хама вали кӳлĕ тумарăм.
Ун чух шăхăрса эп çӳрерĕм,
Ялан ямăтти шыраттăм...

Ун чух, ас тăвап, илтĕм
Ют тĕнчерен нумай.
Тен, çавăнпа эпĕ вилтĕм,
Чирлеттĕмчĕ эпĕ пĕрмай.

Халь тин тулса çитрĕ кăмăл.
Чăвашăн та çитрĕ вăхăт!

Тăван чĕлхепе калаçатăп,
Пĕрех эп чăваш пулатăп.

* * *

Ăçта карташçă?
Çавă çынсăр
Ман чунăм халĕ çырлахмасть.
Кĕр тăршшипе вăл çулсем уçрĕ,
Уттарчĕ пурнăç таранах.
Ак, халь каллех
Юр ÿксенех
Таçта çухалчĕ çулсăрах...
Ку çул çинче
Темле пит тарăн
Выртать шур юр кĕрт пеклерех.
Ăна никам та
Тасатмарĕ.
Утма пит йывăр пурнăç пек...
Карташçăна курсан
Каласчĕ,
Çул уçса пар чун кĕтнĕ чух!

* * *

Тепре пăхса илетĕп
Эп чăрăшсем çине.
Вара тухса килетĕп
Çак шур хула патне.
Епле ман чăрăш ларнă
Шур юр пек кăпăшка.
Ăна эпир вĕт лартнă
Çуркуннепе кăна!
Халь тин пĕччен пек эпĕ –
Ман чăрăш аякра...
Киле тепре килсен те
Пыратăп сан патна.

***

Виç чăрăш – пĕр хӳтĕ хӳшĕ.
Тахçан ӳссе ларнă кунта.
Вĕсем пуль халь тем те тӳснĕ,
Çапах хупăрлаççĕ сана.
Ку чăрăш турачĕ лăссиллĕ.
Пăхать ăна çил лăскаса.
Йĕппи мĕн пулса юр пĕрчиллĕ,
Ӳкет çиле май тăсăлса.
Ӳксен те пĕрех хăрамастăн,
Турачĕ пит сыхă тăрать.
Эс чăрăш айне пытанатăн,
Унта халĕ хĕл пурăнать.

***

Тул çутăлать...
Тулать çын саслă
Çак ĕнтĕркенĕ шур тĕнче.
Таçта кулать пĕр хĕр хаваслăн,
Сасси килет çутăпала.
Ак, çын иртет...
Таçта васкать хăй.
Пуçне пĕксех çулне уçать.
Тул çутăлать хăйне пĕлсех пуль –
Çынсен çулне те çутатать.

***

Кĕтме пит лайăх...
Чун, кĕтӳçĕн,
Хăйне курса кăшт лăпланать.
Халь ман теме кĕтсе тăмалăх
Чун вăйĕ кăшт пуçтарăнать.
Кĕтех, апла, эс кĕт, кĕтӳçĕн,
Çитсе тухатăн ху патне...

Ху пурнăçна аса илетĕн,
Кĕтетĕн тепĕр пурнăçа...
Унтан, тен, çиткелет кĕтнийĕ,
Хăй çутипе капăрланса.
Таçтан çапать ку çутă тейĕн?
Тен, çавăнпа кĕтеп сана!

***

Чун пек ялтăран тӳпене
Тепре çеç вĕçсе хăпарасчĕ.
Курасчĕ çав ял урамне,
Тепре унпала-çех утасчĕ.
Ун чух çурхи каç çупăрларĕ
Пĕр хĕршĕн сикен чĕрене.
Мана çĕр çинче хăвармарĕ,
Çĕклерĕ çӳлтен те çӳле...
Ун чух çăлтăрсем шăнкăравлăн
Кулатчĕç çав хĕр сассипе..
Мĕн-ма эс ăна ăсатмарăн
Пĕр пĕчĕккĕ килĕ тĕлне...
Ăсатнă пулсан вăл калатчĕ:
«Пуласчĕ санпа ман пĕрле!»
Ун чух манăн чун ялтăравĕ
Пулатчĕ çут çăлтăр пекле.
Халь ĕнтĕ çухалчĕ çав каç та,
Халь тин янрамасть хĕр сасси.
Çапах тепĕр чух илтĕнет пек
Чуна çăлтăрсем калаçни...

***

Турă пире йывăç лартса панăччĕ
Уй варрине, лаштра юман тесе...
Çав йывăçа халăх пуç çапатчĕ,
Пуç çапнăçем хитреленсе...
Вăхăт иртрĕ, çав йывăçа касса ячĕçĕ.

Йывăç тени пĕлĕтпе çыхăнтараканччĕ.„
Халĕ ĕнтĕ уй та тăрса юлчĕ пĕччен çĕ.
Çавă уйпа пире çыхăнтарнăччĕ...
Пĕр шутласан, тĕрĕс те пулĕ ку, тейĕр.
Çын çĕр çинче кăна мар, пĕлĕтре те...
Эпир вĕçсе килнĕ, тет, уçлăхран. Халĕ ĕнтĕ
Тур йывăççи курăнмарĕ пĕрре те!

***

Тĕтреллĕ ир тĕтреленте рчĕ
Ман ăсăмпа сисĕмлĕхе.
Ирхи çанталăк тĕлĕнтерчĕ,
Кăтартрĕ хăйĕн сĕмлĕхне.
Ун мĕн шалта кĕтретлĕх вăйлă,
Туртса илет хăй ытамне.
Пăхса тăранайми хăватлăн
Пăхса тăраççĕ хурăнсем.
Уй-хир таçта тĕтреленет пек,
Юхса тăрать шап-шур кĕртсем.
Тавах, тăванлă çĕрĕм-шывăм,
Мана çапла та савнăçем,
Эс вĕт хăвна та халь манмарăн –
Сăн кĕртрĕн шурă тĕтрепе!..

***

Пурнăç нумай та юлмарĕ.
Вăхăт чупать сиккипе.
Вăл никама та курмарĕ,
Иртрĕ çак çул варрипе.

Вăхăт, мĕн-ма кăтартмарăн,
Хăшĕ ман çул тĕрĕсси?
Çул юппинче чарăнмарăн –
Пулмарĕ хама пĕлесси.

Вăхăчĕ те, ку, сахал пек.
Ваттăн тăрап çул çинче.
Килĕм тĕлне çитмесен те
Вилесчĕ ман çул юппинчех!

Çул юппинче, тет, пурнăç
Упрать хăйĕн чăн вăйне.
Çул юппинче эсĕ курăн,
Ху халĕ кам пулнине.

* * *

Çырлаллă çанталăк. Хĕвеллĕ...
Ĕшне ăшĕнче ик ача.
Тăрать симĕс курăк чĕвенĕн,
Хитре çырлана упраса...

Çырла тесенех хускалнă
Ача чĕрисем ялта.
Ик йĕр курăк тăрăх хăварнă
Вăрман хĕрринчи пĕр çулпа.

Çырла питĕ пысăк, хĕп-хĕрлĕ...
Ăна халь татма çăмăл мар.
Çырла тенисем те тем тĕрлĕ –
Чечек тунипе çыхланать...

Пĕрех икĕ алă пĕлеççĕ
Хитре çырлана та татма.
Часах пураксем тулаççĕ,
Тухатпăр киле те кайма.

Киле кайнă чух асамлăн
Юлать пек çырла ĕшни.
Ача чунĕнче савăнмалăх
Юлать çак çырла ĕмрипех!

***

Çара ура кĕлли ыратрĕ
Çул баррипе те чупнă май.
Тен, çав кăштах чуна хăратрĕ –
Ыраттаратчĕ вĕт самай!
Çапах ача ниме пăхмасăр
Вĕлтĕртеттерчĕ çаруран.
Ял çĕрĕпе çапла чупмасăр
Епле халь ĕнтĕ пурăнан?
Çăра та сывлăш çăтнăçемĕн,
Тата аван пек туйăнать.
Тăри çӳлтен те ӳкнĕçемĕн,
Чĕре те талнă пек пулать.
Чупах, ача, чупах эс вăрттăн
Çак çĕр кăшт панă вăйпала.
Вара уру та питĕ хăвăрт
Ирттерĕ çакă вăхăта!

***

Хĕвел кĕрет хăватлăн,
Чуна уçса ярать.
Мĕн-ма, шутлап, яваплăн
Çут умĕнче тăрап?

Хĕвел пурне те пачĕ
Çап-çут пайăркине.
Таçта та пуль хăварчĕ
Чăн пурнăç ăшшине.

Тавах сана, хĕвелĕм,
Вăй патăр çутатма!
Манăн чунри кĕвелĕк
Халь пулчĕ пурăнма.

Эс пултăн ăшăнмашкăн
Сĕм вăрманта паян.
Эс пултăн тасатмашкăн
Çут çăлкуçа ялан.

Тавах сана, пăхнишĕн,
Мана куçран савса.
Çак тĕнчене килнишĕн,
Çынна кăмăл тума.

Кĕрсем ман пӳлĕме те.
Кĕтеп сана ирпе.
Эс пӳлĕме кĕрсен те
Курнатăн Турă пек!

***

Шоколадкă тĕслĕ пĕр хĕрарăм
Хăйĕн ӳчĕпе кăшт мухтанать.
Эп вара унран кăштах хăрарăм –
Вăл мана йăлтах вĕт кăтартать!
Ак сана, хĕвел кусса тухаслăн,
Сан умра пĕр тĕлĕнтермĕш, тет.
Пӳрнепе тытса пăхса кураслăн,
Чĕтреме часах еретĕп вĕт!
Ах, аван та ун яка пит-куçĕ...
Хĕвел хăй савса пуль кунсерен?
Мĕнлерех-ши пулĕ пуçĕ-кучĕ –
Ăна халь хĕвел пĕлет-и, тен?
Пăх-ха, пăх, хĕвел, мăнтарăн,
Тăранаймăн эс пăхса каçчен.
Каçхине вара эс ху та тем çухатăн
Кураймасăр çак ӳте ирччен...

***

Хура вăрман çийĕн шурă-шурă уйăх

Юман йывăç мĕлкине ӳкерчĕ.
Çавă мĕлке пулчĕ пулĕ уйăх çулĕ,
Вăрман çиййĕн шунăçем вăл шурĕ.
Уйăх панă çулăм ман та пурччĕ.
Вăл та вĕт мана таçта тĕллерĕ!
Уйăх иртрĕ те мĕлке те пĕтрĕ.
Ăçталла, тет, каймалла – пĕлмерĕм.
Уйăхăм тепре тухать-ха, эп пĕлетĕп.
Уйăхпа пĕрлех тепре килетĕп.
Уйăхăн ун пур, тет, хăйĕн çурчĕ.
Çав çуртран тухать пуль пурнăç çулĕ.

***

Пĕр тупсăм тупрăм, пурнăça
Тытса тăрать çемье кăна.
Çемье кăна хăй пĕр хуçа –
Çав кĕчĕ халĕ ман пуçа!
Çемьесĕр çын та çук пулех!?
Ача сассисĕр çук тĕнче!
Киле çитсе вут чĕртсенех
Пурнăç тепре килнĕ пекех.
Çак пурнăçра, çемье, тесен
Телей тени вăл – пулатех!

***

Хĕвел пăхать хаваслăн.
Тĕнче хитреленет.
Татах, ак, тем тăваслăн
Шур юр вĕçтеркелет.
Халь çавăн пек çанталăк –
Ун пур хăйĕн йĕрки.
Часах, акă, хăватлăн
Хускалĕ юр пĕрчи.
Хĕвел пекех çап-çуттăн
Шур кĕрт йăлтăртатать.

Кёрт айёнче те тутлăн
Çурхи хёвел çывратьь.

* * *

Чиркӳ умёнче тăратăп...
Кёрет те тухать такам...
Хама та унта куратăп –
Вёт эп те çынран ытла мар!

Шутлатăп, ку пурнăç терчё
Пурне те пырса тивет.
Мана та илсе çитерчё
Тур çурчё умне тивлет.

Эп ёнтё чăлах та марччё,
Кёменччё кун пек çылăха.
Пёрех эп кăна курманччё –
Курман эп кун пек чăлаха!

Тем пулчё мана, пёлмерём,
Кăлартăм пур-çук укçана.
Никам та çавна сисмерё –
Никам та ан куртăр ăна!

Эп патăм, хама пуль, мăнтарăн.
Туймарё те вăл панине.
Хамран çавăн чух хăрарăм –
Вёт эп те шăпа аллинче!

Ун пек пулас марччё-çке, тетёп.
Пулмастăп кун евёр чăлах!
Пёрех тепёр хут килетёп
Тур çурчё умне пуç çапма.

* * *

Хĕрсем кулса пыраççĕ,
Каяççĕ пухăва...
Вĕсем пăхса курмаççĕ
Чунри ман пăлхава.
Кулаççĕ те иртеççĕ
Инçе каян çулпа.
Çын иртнĕçем ӳкеççĕ
Сăмахĕсем – чул пек.
Вĕсем пек мар пыратăп,
Вĕсем пек мар пурнап.
Эп ватă курăнатăп
Çак çамрăк пурнăçра.
Мĕнех, вĕсем те иртчĕр –
Иртсен те irttĕр çул!
Эп çакăнтах выртатăп –
Мĕн-ма тесен, эп чул!

***

Каллех тинклетме пуçларĕ,
Кăларчĕ чăн хĕл сассине.
Вăл хăй сăмахне каларĕ –
Хĕл çитрĕ хула варрине!

Малтан вăрманта та аванччĕ.
Унтах пурччĕ манăн апат.
Хĕл çитрĕ те çавă çухалчĕ –
Мĕнле халь пулать шăпа?

Пĕр чĕптĕм пулсан пурнатăп.
Çинçе çеç сасса кăларап.
Ăна кам илтсен те пултарĕ –
Хăйне калама – эп пурнап!

Пурнать-ха ку, пĕчĕк кайăк,
Ку халь те вилмен-и хĕлле?

Вăл пултăр, апла, чăн палăк.
Чĕр палăк çак юр çинче!

* * *

Тĕнче кусран пăхса юрларĕ:
Эс япăх мар, эс лайăх çын!
Мĕн калани сая каймарĕ,
Ман чĕрере те пур ыр юн.

Мĕнле тĕнче пăхать хăюллăн
Çак чĕрепе пĕрле паян.
Нихçан та вăл чупман пек юсăн,
Сăмахсăр утăм та пусман...

Ялан каланă, лайăх пултăр,
Нихçан ан çулăхтăр усал.
Тен, çавăнпа пăхса çеç юлтăр
Усал сăмах калан юлхав.

Сахал юлса пирĕн кунсем те,
Юрсем каяççĕ хăйне май.
Пĕрех кĕскелнĕ каçсенче те
Тупатпăр чăн телей пĕрмай.

* * *

Февраль пуçланчĕ. Нарăс уйăх
Хĕвеллĕ пулаканччĕ те...
Картишĕнче темле шур сурăх
Упаленет урам енне.
Вăл та паян кĕске уралла,
Сисет пулех çур ăшшине?
Пӳрт хĕррисем те халь хуралнă,
Çиле тураççĕ пăрлаксем...
Пăр тăрăх юхрĕ çут тумламăн
Хĕвелĕн пайăрки çĕре.

Ăна катса çисе пăхатăп.
Анне калать пек: «Ан аташ!»
Сивĕ çисен, хĕл пек пăрланăн,
Пулатăн шурă сурăх пек.
Вара çилсем куçа хупланăн
Эп ас илеп: «Февраль килет!»

***

Пăрлаклă тĕнче тăрăх
Пĕр-икĕ сехет те утрăм.
Куртăм тем чухлĕ хурлăх,
Куртăм çын ăшшине те!
Пасар тĕлĕнче, акă,
Ларатчĕ пĕр пысăк бомж.
Çынран вăл укçа ыйтатчĕ, –
Паратăп-çке эп те кăшт.
Каçрăм пĕрре çех çул урлă –
Унта вĕт каçма юрамсть! –
Пĕр ДПС сержанчĕ
Парать мана пысăк штраф...
Çул пăрлă та питĕ лайăх
Утма та пулать паян.
Ытла та пит хăвăрт кайсассăн,
Шуса та ÿкен ярт!
Çул, асăрхан-ха, терĕ,
Ан каç юраман çĕрте.
Шуса та ÿксен пĕтетĕн,
Кĕрен, ак, машин айне!

***

Пĕр пĕчĕк утрав
Пур çак пÿлĕмре.
Чăваш хĕрĕсен утравĕ!
Унтах чăвашсен çăтмахĕ!
Кам пулнă унта

Çав Турă пек хăй те
Унта, мĕнех калăн, пулать!
Улмаллă-çырлаллă хĕр пичĕ,
Юманлă-çăкаллă яш-кĕрĕм.
Унта Çĕр-Анне те, тӳпеçĕм–Атте
Пурне те илеççĕ йышне.
Утравĕ чĕлхеллĕ, тахçан авалхи,
Тахçан тунă пулĕ хăй Турă?
Эсир çавăнта пулса та курсан,
Пулатăр, тен, хăвăр та Турă!

***

Чипер кăна ăста хĕрсем,
Тур тунă пек шур улмасем!
Калаçнăçем ăса уçатăр,
Шутланăçем – турăланатăр.
Халь ĕнтĕ сирĕн пек пуласчĕ,
Шутлатăп, хам çинчен кăштах.
Сирĕн пекех хĕрсе шутласчĕ...
Сирĕн пекех, тен, калаççан,
Эп хам та Турă пек пулатăп...

***

Çӳлтен эп шурă юр пек çурăм,
Эп çил кăлартăм утнăçнем.
Эп çут çанталăк пек чӳк турăм,
Утса та вăйăм пĕтнĕçем.
Вăй çук чухне эп вăй кăлартăм
Хам ăш-чикрен, хам чĕремрен.
Хĕвел те тухнă пек эп пăхрăм,
Эп пултăм вăйлă пĕлĕтрен...
Тен, çавăнпа шур юрĕ çурĕ?
Тен, çавăнпа вĕрет сив çил?
Манăн чĕре асамлăн сурчĕ,
Ыйтса та илчĕ пысăк пил.

Халь тин эпир тек аптрамастпăр.
Вăй çук пулсан та утăм пур.
Çак шур çула утса тухатпăр,
Çул çук пулсан – хыватпăр пуль?

***

Çак самантра майĕпен
Сивĕ хĕл кунĕ иртет.
Çул тăршшĕпе çӳрекен
Ку вăйăма пĕлет.
Тен, çавăнпа пит хавас
Çул хĕрринчи кăсăя?
Манăн та пуль кăларас
Чун тĕпĕнчи юрра.
Юрлать, утнăçем, ман ура –
Утма та халь пит аван!
Юр шывĕ мана кура
Пуçлать майĕпен шавлама.
Хĕвел те выляврăн тухать,
Çурхи пĕлĕте шăтарать.
Куракĕ те хыт кăшкăрать,
Йăвашăн пуль вăл çапăçать.

***

Юр çăвать, юр çăвать,
Сукмак юрпа çăвăнать.
Эп утатăп ун çийĕпе, –
Эп те юрпа çăвăнап!..
Эп утакан сукмак вĕçĕ
Пĕлĕт пекех туйăнать.

***

Çемçе çанталăк çемçетет çав,
«Çемçе» тесе калаттарать.
Ку çут çанталăк хăй пĕр кĕвĕ,

Кĕвви чуна ыраттарать.
Тен, кам илтмест пуль,
Ним те мар, тен?
Мана вара ку пĕтерет!
Ун сассине илтсе вăрахăн
Çурхи çул çиййĕн йĕр хывап...
Çемçе çанталăк çемçетет çав –
Ман йĕр те халь çемçен тухать.

***

Пырса кĕр те – никам курман евĕр,
Сывлăш евĕр çӳре çаврăнса...
Ку тĕнче те – çапла тăнă тетпĕр –
Эпĕр пулнă чухне юр çуса!

Пĕр çул-йĕрсĕр, пĕр йĕр хăвармасăр
Эп çӳрерĕм пĕр уçлăх туса.
Кам мана шыраса халь тупайтăр, –
Ман пĕр йĕр те юлман кунта!

Эх, çапла сывлăш евĕр пуласчĕ,
Кăшт сывласчĕ çанталăк пек...
Ун чухне эп сана мĕн тусаччĕ?–
Эп туйсаччĕ хама Турă пек!

Пĕр тĕлленчĕк пекех эп çӳрерĕм,
Курăнмарăм никамăн куçне.
Юр çуса пĕтĕмпех пĕтерчĕ
Эп çӳренĕ çулсен йĕррине.

***

Шырарăм, шырарăм, шырарăм,
Шырарăм кĕрен чечеке!
Шырарăм – ниçта та курмарăм –
Выртатчĕ-ха юр çĕр çинче.

Кĕрен чечеке – тупмалăх
Ман пурччĕ-ха çивĕч куç.
Ăна чун валли асăнмалăх
Кăштах та пулин – хуç!

Ӳсет вăл куçа курăнмасăр
Юр кайнă чухне вăрманта.
Ăна тепĕр хут татмасăр
Пулмасть пуль тата пурăнса.

***

Кăчкă темччен кĕтсе ларчĕ:
«Килĕр-ха, хуçăр-ха, – тет.
Пĕчĕк чĕппи пек кăларчĕ
Шур мамăк... Вăл та пĕлет,
Çак тĕнчере мĕн илемлĕ,
Мĕн-ха тата илĕртет?
Тен, çавăнпа илемлĕ
Кăчкă уявĕ килет?..
Пытăм эп, чăн та, хуçа пек
Тăсрăм алла: «Ак, хуçап!»
Çук çав, темле пĕтес пек
Туйрăм хамра тем асап.
Çук, эп хуçмарăм, уяв вăл
Пĕррĕ килет те каять!
Кăчкă вара хăватлăн
Мĕн ĕмĕре юлать!

***

Хĕвел тени хăна пекрех-ши,
Йăлтăртатса кусса тухать.
Кашни кунах пире кĕтсе-ши,
Çут анăç еннелле анать.
Анчах та, ак, паян пăхатăп,

Хĕвел тухать ана çинче.
Йăран тăршшипелех хăватлăн –
Пуçне кăларчĕ сар чечек!

***

Ыйтулать тĕнче. Мĕн ыйтать?
Мĕн ыйтни те çук, паллă мар вĕт-ха!
Мĕн хуравĕ, тет. Ăна кам пĕлет?
Ыйтăвне те вĕт халь пĕлместпĕр-ха.
Кун пек чух, паллах, аптăрамалла,
Çапкаланчăк пек курăнтармалла.
Ним те çуккă ман, кирлĕ мар тĕнче –
Çулсем юппинче эп тăрап пĕччен...
Халь тин кайăп-ши... Тен, каймастăп та.
Эп ларса канап çулсем юппинче,
Эп ларса канап, кăштă шухăшлап –
Ак, çул ыйтăвĕ куç умнех тухать.
Ман хурав пĕрре! Пăхса лартăм-иç...
Пăхса ларнăçем хурав килчĕ-те!
Ман хурав тĕнчи симĕс куçлă-çке,
Ăçта кирлĕ, тет, çавăтсах каять...
Хальлĕхе вара, кил çумма ларма.
Тĕнчен пĕр ыйту, пул хурав пама!
Эп ăнлантăм тин. Мĕн ыйтни – эс çеç!

***

Вăрман шавлать...
Темскер каласшăн
Çĕр айĕнче тем хускалать.
Юман тĕлленĕ шурă пĕлĕт
Шур чечеке ас илтерет.
Юр вĕçкелет.
Тăвайккинчи сарă чечек
Юман пекех кăшт чĕтренет.

***

Йӗкелне ҫӳлтен пӑрахрӗ
Чӑрӑш ҫӗр ҫине.
Ҫавӑнпа кӑштах хӑрахӑн
Тӑчӗ ҫил ҫинче.
Эп ҫӳлех пӑхса илетӗп,
Чӑрӑш тӑррине...
Тӑрринче нумай, пӗлетӗп,
Йӗкел пуррине.
Пурпӗрех теме шеллетӗп –
Пит хитре йӗкел!
Ак, часах такам килет те
Пуҫтарса илет...
Халь ӑҫта, тет, кун илемӗ? –
Йӗкелте кӑна!

***

Мӗн ҫинчен каласшӑн пултӑн, –
Эп илтмерӗм те.
Ҫул ҫине тухать чӑн пулнӑн –
Юман, терӗм те...
Темӗнле вӑл асса кайрӗ –
Чӑрмалать чуна.
Нивушлӗ вара, ҫапла ҫунатлӑ
Йывӑҫ пур кунта?
Вӑл вӗҫет вӗт, асӑрха-ха!
Ун ҫунат та пур.
Сан вара, ӑҫта, хӑлатӑн
Сар эс ҫунатна!
Тем ҫинчен каласшӑн пулчӗ
Ҫул ҫинчи юман.
Асӑмра пӗрех вӑл юлчӗ
Армак-чармакла.

***

Миҫе хутчен эп йӑнӑшман пуль,
Ӗҫе тытса тума тӑрсан.
Ун пек те тунӑ, тен, кун пек те –
Пӗрех ман ӗҫӗм ӑнӑҫман.
Мӗн-ма тесен, эп итлемен, тен,
Чӑваш каланӑ пӗр чӑна.
Ӗҫ пуҫличчен малтан эс ил-ха
Халӑх пуҫтарнӑ чӑн ӑса.

***

Эп сан пата кӑшт ҫывхарсаччӗ...
Тытма тӑрсаччӗ аллунтан.
Анчах та пурнӑҫӑм памасть-мӗн
Татах та ҫывӑхрах тӑма.

Куҫран пӑхса, алран тытса
Санпа кӑштах утса пӑхасчӗ.
Кӑшт май килсен татах, тата
Ҫӗнӗ тӗнче туса хурасчӗ.

Анчах, каларӑм, тем памасть ҫав
Тӗнче туса хума татах.
Тен, ҫак шеп килнӗ чӑн шутлав
Чарса тӑрать-тӗр... Пултӑрах!

Эп пурпӗрех пырса тӑратӑп
Татах, татах та ҫывӑхрах.
Ун чух вара мӗнле хӑрамӑн –
Тарса каятӑн ҫавӑнтах.

Ҫапла ҫав вӑл. Ҫапла ман пурнӑҫ –
Инҫе юлатӑн эсӗ те!
Ҫапах та кӑшт темскер эп курнӑ

Санпа пӗрле тӑнӑ чухне.

Эп сан пата кӑшт ҫывхарсаччӗ...
Халь тин пулмасть пуль тепӗр хут.
Эп ӗмӗтре кӑна шутлатӑп –
Куҫран пӑхасчӗ тепӗр чух...

* * *

Юр айӗнчен пек шӑтса тухрӗ...
Пӗр пӗчӗк хӗрлӗ ҫеҫ чечек.
Тухсассӑнах епле вӑл хухрӗ,
Тин ҫеҫ ҫур кунӗ килнӗ пек.

Пуҫна ҫӗкле ҫуралнӑ ҫеҫпӗл,
Ҫурхи аслати пек кӗрле!
Юр айӗнче эс чечек ҫеҫчӗ,
Шӑтса тухсан – ху пӗр тӗнче!

Юр кайрӗ майӗпен... Ҫӗр ҫиййӗ
Халь тин симӗс кавир пекех.
Анчах мӗн-ма-ха ҫеҫпӗл пичӗ
Каллех шӑнса каять ирпе.

Пырса татасчӗ, теп, ир кӳлӗм
Чӗре пек шӑннӑ чечеке.
Кӑкӑр патне тытсан, тен, ӳлӗм
Чечек тек шӑнмӗ ҫил ҫинче.

Ҫапла ҫав, тӗнчери ҫил вӑйлӑ
Шӑнтать пурне те ҫул ҫинче.
Тен, ҫавӑнпа чечек пек шӑннӑн
Тухса тӑратӑп ҫын умне.

Юр айӗнчен пек шӑтса тухрӗ...
Кӑвак хуппи пек пӗр чечек.

Тухсассăнах епле вăл çутрĕ
Çак тĕнчене парса тĕрек.

* * *

Чик-чик! çеç чĕриклетрĕ
Пĕр пĕчĕк çеç çерçи.
Умра кăшт сиккелерĕ
Ыйтса çăкăр пĕрчи.
Ытла та пит иленнĕ
Ку кайăксем алла.
Çын умĕнче вĕреннĕ
Темле пит ташлама.
Парап, парап тейетĕп,
Тепĕринче апат.
Ирпе каллех килетĕп,
Вара, тен, чун тулать!?

* * *

Ман тĕнче, тин ăнлантăм,
Пĕчĕкçеç пĕр ача.
Çав ачашăн шуйлантăм –
Çăлса пăх-ха ăна!
Ак, чăнах та, ача пек
Сиккелетĕп кăна.
Ача евĕр пулсан, тен,
Эс хăтарăн хăвна?
Эп шутлатăп, утатăп
Тĕнче тăрăх пĕрмай.
Тĕнчене эп куратăп
Ача евĕр, хам май.
Тепĕр чух, тен, куççуль те
Чĕререн ман тухать.
Ах, чăваш, ачине, тен,
Пулăшасшăн пулать?
Тĕнчере пĕр ача çех

Юлнă, тен, халĕ тин...
Эсĕ халĕ çавна
Пулăшатăн... Хăть вил!
Пĕр ача çеç юлать-и?
Мĕн тăватпăр... Ах, Тур!
Вăл тĕнче пек пулать-и? –
Çав тĕнче эсĕ ху!

***

Хĕвел тухать-ха... Савăнатăп.
Хĕвел, эс ман пекех-ха пул!
Çак тĕнчене курсан, шутлатăп,
Пурне те пил паратăн пуль.

Кала, вăрман, пĕр вăтанмаасăр:
Тавах сана, хĕвел, эс пур!
Çак тӳперен кусса каймасăр
Тĕнче нихçан та пĕтмĕ, кур!

Кала тата, ку çын вăрмансăр
Тăрса юлсан халь мĕн тăвать?
Эп çавăнпа пĕр ывăнмасăр
Пĕр йывăçран вăрман тăвап.

Çак шыв та, акă, шăнкăр-шăнкăр...
Эп пăхнипе вĕт тасалать.
Тӳпе тăрсассăн тарăн, чакăр,
Мĕн шутлани – пурнăçланать.

Çапла шутлать чăваш: килнишĕн,
Хĕвел тухнишĕн савăнать.
Тен, вăл теме аса илнийĕн,
Тен, вăл та хĕвелпе каять?

***

Эп пĕр сăмах та калаймарăм...
Калас тени нумайччĕ-çке!
Хама, тен, эпĕ тупаймарăм,
Сана тупас тенĕ чухне?..

Тен, çавăнпа темле асаплăн
Хытса та килчĕ юрату.
Тепĕр чухне епле хаваслăн
Юхса пыратчĕ калаçу...
Ак, халь вара мĕскер-ха пулчĕ,
Мĕн-ма шăнаççĕ сăмахсем?
Тен, Турă хăй пире кăшт пӳлчĕ,
Сăмахлани ахаль тесе?

Чăнах та, тепĕр чух сăмахлăх
Тапса тухать ахальтенех.
Çитменнине нумай чухне вăл
Чăннипеле суя пек çех!

Тен, Турă, чăн та, пире чарчĕ
Юратăр, тет, сăмахсăрах!
Чăн юрату тенин хăвачĕ –
Вăл курăнать вĕт куçранах!

Куçран пăхса мана юратрĕ
Пĕр хĕрупраç тени татах.
Мĕн-ма, тет-ха, вара вăратрĕ
Чăн юрату сăмахсăрах?

* * *
Сăпайлăн, сăпайлăн кăшт сĕртĕнчĕ пуль
Пĕр алă ачашшăн, чĕтревлĕн...
Çурхи ăшă çумăр кăшт ӳкнĕ пекех
Хама çавăн чух эпĕ туйрăм.
Эп туйрăм сана ăш варкăш çил пек.

Çапла пурăнать юрату сан.
Сана туйнă чух шыв юхрĕ аран.
Ытла та пит шăп ку çу каçĕ...
Ачашшăн-ачашшăн никам та туйми
Хускалчĕ чунра сан пĕр пĕлĕт.
Çав пĕлĕт хупларĕ. Çак çут тĕнчере
Сана çеç куратăп, чăн пулĕ,
Чăн пулĕ çапла пĕр сисми пурăнни,
Никам та ан пĕлтĕр тесе юратни...
Юрат эс, чăнах та, юрат вăйлăрах,
Анчах та никам та ан пĕлтĕр!
Кăшт çеç сĕртĕнсессĕн çемçе çеç аллу
Тĕнче те вăрантăр вăрçма пек.
Анчах çав вăрçа никам та курмасть,
Никам та курмасть сан чуна та.
Халь мĕн-ха вара, юрату тет-и, ку?
Е, ку, чăнласа пурăнни тет?
Пĕрех, кирек мĕн, кирек мĕн каласан та,
Кăштах ман çума эсĕ сĕртĕн.
Ачашшăн-ачашшăн вăрантăр тĕнче.
Тĕнче вĕт вăл хăй те сар хĕр пек!

* * *

Хĕрсем тăраççĕ çил çинче...
Калаçăвĕ, хитрен кулни
Пырса тивеççĕ чĕрене.
Хĕрсем тăраççĕ çил çинче...
Çав çил çинче вĕсен чĕрийĕ
Татах та хĕрӳрех пек-çке!
Калаçăвĕ, хитрен кулнийĕ
Хушаççĕ чĕрене хăват.
Эй, çилĕ те, çав çурçĕр çилĕ
Çакă тĕнче çилли пекех
Пире çапса хуçма тăрать...
Анчах та çак хĕрсен чĕлхийĕ

Хӑй хӗрнӗ хурҫӑ пек ҫунать.
Вӗсем калаҫҫӗ Патриарх пек:
«Ҫак ҫил те халӑхшӑн вӗрет!»
Тен, ҫавӑнпа хӗрсен чӗрийӗ
Ҫурхи чечек пек чӗрӗлет.
Кӑмӑлӗсем тӗнче хушаҫҫӗ,
Тен, вӑрттӑн шухӑшне пӗлсен,
Татах та пурӑнас килет...
Ҫакна курать вӗт Патриарх та:
«Дак, эдак, – мӗн, – разбойник», – тет.
Кашни ҫулах чӑваш эшкерӗ
Уяв тума кунта килет.
Тем пек вӗрсен те ҫурҫӗр ҫилӗ
Пире пӗрех пӗтерейместь.
Мӗншӗн тесен хӗрсен чӗрийӗ
Хӑй хӗрнӗ хурҫӑ пек хӗрет.
Ҫӳрет тавра темле вут-хӗмӗн
Чӑваш каланӑ чӑн сӑмах.
Юррисене кам тет итленӗ,
Нихҫан, вилсен те манаймасть!
Тен, ҫавӑнпа паян уяв-тӑр.
Тен, ҫавӑнпа чӗре ҫунать.
Тен, ҫавӑнпа хӑш-пӗр хӑравҫӑ
Кунта пырса та курӑнмасть.
Кунта та пынисем тӑраҫҫӗ
Вӑрман пекех карталанса.
Ҫавсем вӗт ҫилсене чараҫҫӗ,
Чӗрисемпе хӑпартланса.
Ак, пӗчӗк ҫеҫ пӗр хӗр пӗрчийӗ
Юрлать асламӑш юррине.
Хӑҫан та кам ӑна итлемӗ –
Юрри вӗҫет сив ҫил ҫине.
Тен, ҫавӑнпа та ҫил тенийӗ
Пире тивеймӗ пурпӗрех.
Мӗншӗн тесен хӗрсем тӑраҫҫӗ,

Хĕрсем тăраççĕ çил çинче!
Кăмăлĕсем хĕвел пек çиçрĕç –
Çак ушкăнра халь чăн çăтмах!
Каланă пĕр сăмахĕсем
Хĕвелле çил пек пулчĕç те
Пил пачĕ ватă Патриарх!

***

Нимпех те паллă мар тĕнче
Куç умĕнчех тăрать.
Çапах паян та ир çинче
Хĕвел пĕрех тухать.

Çапах, çапах та ним те çук –
Халь курăк та тухман!
Йăри-тавра пăхсан та ху,
Ху çеç пуль курăнан...

Чечек çинче хурт сĕрлемест –
Чечек те çуккă вĕт!
Çур кунĕ халĕ те килмест.
Тен, вăл тĕлне пĕлмест?

Йĕри-тавра халь ним те çук.
Эп хам та çуккă пуль?
Пĕрех паян та ир çинче
Çавах, çав çут тĕнчех!

***

Пулать-ха мăйăр. Çуккă мар,
Халь курăнмасть пулсан та.
Ак, кĕркунне çитсен куран –
Вăл сан куçран кайман та!
Хĕвел çине вăл çакăнать
Хĕп-хĕрлĕ мăкăнь евĕр.

Анчах пăхсан та курăнмасть.
Патне пырсан, тен, тепĕр,
Тен, тепĕр хут çиçет çут пек –
Чечекĕ вăл пит пĕчĕк...
Тен, çавăнпа килме пĕлет
Çак тĕнчене пит хăвăрт?
Пит хăвăрт çав иртсе каять
Çакă тĕнчен асамĕ.
Паян та, акă, вăл çунать
Кăвак хуппийĕ майлă.

* * *

Сар чечеклĕ çĕр.
Кăчкăллă тӳпе.
Хушшинче çӳретпĕр
Пурнăç пур тесе.
Ак, чечек тататпăр...
Кирлĕ мар татма!
Хăвана куçатпăр
Тем уявлама.
Çĕрпе пĕлĕт пачĕç
Тем те пĕр пире.
Мĕншĕн-ха пĕлместпĕр
Тĕнче пек пулма?

* * *

Ума чупса тухрĕ
Пĕр кăвак чечек.
Хăйне татма ыйтрĕ:
«Тат-ха, тат-ха», – тет.
Çук вара, татмастăп.
Эп татма килмен.
Пит татас пулсассăн,
Мана татăн, тен?
Чечек мар та эпĕ –

Чечекрен хавас!
Çавăнпа килетĕп
Вăрмана час-час.

***

Эпир тахçан иленнĕ
Çап-çут çанталăка.
Тен, çавăнпа вĕреннĕ
Çын евĕрех пулма.
Анчах та вăхăт иртрĕ –
Çанталăк кирлĕ мар!
Мĕн хамăра та кирлĕ,
Тăватпăр хамăрах.
Анчах çав темĕн пулчĕ,
Халь тем те пур пек те...
Чуна темскер вĕт çурчĕ –
Пур тени мар пуль те?
Кун пек пурпа май çуккă,
Май çуккă пурăнма.
Мĕскер-ха пирте çуккă,
Пăрахрĕ курăнма?
Пиртен тарса çанталăк –
Пĕтертĕмĕр ăна.
Халь тин эс çын пулас-тăк
Кĕрсемччĕ вăрмана.
Эпир тухса тахçан, тет,
Сĕм-авăр вăрмантан.
Тен, çаăнтах тупса та
Çак йывăçри чуна?
Апла, тет, ытала-ха
Ват юмана татах.
Вара, тен, çын пулан-ха,
Е йывăç пек пулан?
Эпир халь тем те курнă.
Мĕн курăпăр тата?

Чечек те çын пек çурнă
Чунне çак вăрманта.
Эсир ăна курса-и?
Вĕçетчĕ хурт пекех.
Тен, ун патне пырсан та
Чунне уçать тата?
Вара эс мĕн тăван-ха,
Тататăн-и ăна?
Ăна татсан пулан-ха
Пĕр чунсăр çеç ача.
Апла пулсан ан тат-ха,
Ан тат чечек чунне!
Тен, хăвăнне парсан та?
Чечек пулан тепре!

***

Чăваш тумĕн кунĕ
Пулчĕ-çке паян.
Ман чуна тем пулчĕ –
Халь те эп пуян!
Юррисем янрарĕç
Уттисем пекех.
Курнăçем çуралчĕç
Ĕлĕкхи вăйсем.
Ĕлĕк вăл пытаннă
Чăваш тумĕнче.
Çавă вĕт вăранчĕ
Чăваш чунĕнче.
Ак, утса пыраççĕ...
Эс те утса тух!
Кам тет чăвашланнă –
Уншăн вилĕм çук!

***

Çĕлен çырми çĕлен пек

Выртать авкаланса.
Йăлăмкасри ача пек
Ларатăп шăхăрса.
Ман алăра пĕр хулă.
Пĕр симĕс хулă çеç.
Çав хулăран тем чухлĕ
Шăхлич тăватăп кĕç.
Çырма сасси пек шавлăн
Тĕнче ман вăранать.
Шăхлич сасси хаваслăн
Хăй сассине хушать.
Çурхи сас пит хăватлă –
Вăрман тăрри шавлать.
Апла пулсан сипетлĕ
Çумăр тени пулать.
Çырма хĕрри асамлă.
Унта халь тем те пур.
Пĕр пĕчĕк çĕлен майлă
Унта эс шуса пыр.
Унтах сип-симĕс курăк,
Пĕр сиплĕ çеç серте.
Йӳç паранки те, курăн,
Ӳсет ăшă çĕрте.
Эс тат апат çимелĕх
Кĕсье тулли серте.
Сан алăра çиçмелĕх
Чечек те пулчĕ-çке.
Апла, çурхи кун пачĕ
Хăй илемне сана.
Çапла ман кун пуçланчĕ
Çĕленĕн çырминче.

***

Аçа чутах çапмарĕ –
Шыв юхрĕ питĕ шух!

Пĕри шывне ăсатчĕ,
Теприйĕ килнĕ чух.
Шăв-шавлă çутă пурнăç
Курнатчĕ ун чухне.
Çапла çав шывĕ юхрĕ –
Çурать валашкине!
Ку аслати çăлкуçĕ
Парать пек хăй вăйне.
Вăл чăнласах та куçрĕ
Ик шухă чĕрене.
Тин çеç аран пыратчĕç
Пĕр иккĕне сукмак.
Пĕрле пулма шутлартчĕç
Вĕсенĕн чĕрисем.
«Сыв пул, Нарспи», – каларĕç
Сетнерĕн тутисем.
Вăхăт тени кĕтмерĕ,
Иртет ку самана.
Анчах çăлкуç пĕтмерĕ,
Кĕтет пире тата.

***

Сан пата чылайччен ăнтăлатăп,
Çитейместĕп пуль тенĕ чухне
Ман чунра темĕскер йăлтăртатрĕ,
Тем кăтартрĕ пулас хăй чунне.
Эс кăтарт-ха чунна чăн курмалăх,
Пĕр сăмах та пулин эс кала.
Вара юлĕ кайран асăнмалăх
Пĕр сăмах, Турă пек, ман ăшра...
Ах, анчах пĕр сăмах та пулмарĕ.
Ăнтăлни ку суя. Ку эс мар.
Вĕт тĕнче те текех чăтаймарĕ,
Вăл та ячĕ пулас макăрса...
Епле чăтăн, чăнах. Вĕт тĕнче те

Пуçланса, тет, пĕр ăш сăмахран.
Çав сăмах вара халь путланчĕ.
Ларса юлчĕ пулас сан ăшра.
Пĕр сăмах çеç мана эс калинччĕ –
Ним те мар пек вара пурăнни!
Кам тата ман пекех ăнтăлинччĕ
Çак сăмахшăн кăна сан пата.
Çапла пултăр, апла. Уйрăлатпăр.
Уйрăлатпăр пулать теприччен –
Каярах, тен, пĕрех пурăнмалăх
Сăмахран пĕр тĕнче тăвиччен.

***

Пĕр çавра çине пăхса
Эпĕ пурăнатăп.
Эп таçта пырса тухса –
Унта ыр куратăп.
Ак, пăхса ларатăп та
Çаврасем шутлатăп.
Эп ăçта кайсассăн та
Каялла тухатăп.
Кайрăм-кайрăм пĕринче –
Каялла килмес пуль.
Ах, анчах та чĕринче
Ку ачан çавра пуль?
Эп каллех юратрăм вĕт.
Ак, тăван çĕршывăм,
Сан пата та килчĕ вĕт
Çапкаланчăк ывăл.

***

Симĕс çырмаллă тĕнче
Сас пачĕ тепре чĕрене.
Сивĕ çырма тĕпĕнче
Чул, тет, выртать ешерсе.

Çав чул сасси пуль чунра
Халь вăранать чанклатса.
Эпĕр ăна çурт тума
Темĕн чухлех кăларса.
Тепĕр чухне çырмара
Пулă тытма та пулса.
Юлчĕ пуль ку авалра.
Çуккă пулли те паян.
Çуккă шур чул та унта –
Юшкăн тулать майĕпен.

***

Пĕтмен иккен вăл, Вавилон...
Ăçтан килет-ха вăйăм, тетĕр?
Тымарĕ унăн авалтан –
Паян куна ӳссе çитсе-тĕр!
Мĕн авалтан чăваш тени
Хăйне туйса чăн Вавилон пек.
Тăшман çине те чул пени
Халь тин пырса çапать вут евĕр.
Эпир, тет, пулнă чăн патша.
Наукăсем эпир тем чуль ăсланă –
Çавна эпир манса кайса...
Çавна аса илетпĕр мар-и?
Пĕтмен иккен вăл, Вавилон!
Тепре килсе, акă, тустарчĕ.
Мĕне вăл тахçан калайман –
Çавна халь тепре калаттарчĕ.

***

Татăттăм татах эп
Çеçпĕл çеçкине.
Тăваттăм çăтмах эп
Хамăн чĕрере.
Ах, анчх пулмасть çав

Ун пек пурăнса.
Пĕр çĕрте çăтмах та –
Тепринче вара?
Тепринче пуль тамăк
Пуçланать татах.
Эх, чечек татасчĕ! –
Юрамасть пуль çав...
Чĕрери çăтмахăм
Юлтăр чечекрех

***

Çавра çинчен пуç çавăратăп!
Тĕнче тени çавра пек çеç.
Хама мĕн чухлĕ кирлĕ пек
Ăна тепре эп кустаратăп.
Эп хам та вĕт çавра анчах!
Мĕнле юн çаврăнать унта?
Апат çисен те мĕн усси –
Усси тĕнче пурри кăна.
Пĕрех эп ним те мар кунта.
Икĕ çавра тĕл пулчĕç те,
Пĕрне пĕри хускатрĕç те
Тĕнчи те пур, çынни те пур...

***

Çĕр çунатлă хурăн
Çил çинче вĕçет.
Çурхи кун хăй туррăн
Çывхарса килет.
Хурăн шерепийĕ
Хăй пĕр шеремет.
Хĕрача куллийĕ
Чăн та, пĕр шерпет.
Акă, йăл илет-и,

Çуркунне тени,
Юрату пиллет-и
Çĕр Турри?
Çĕр çунатлă хурăн,
Кăчкăра хăва...
Эс ăна халь куртăн –
Тупрăн пуль хăвна?

***

Ушкăнланса ӳсеççĕ йывăççем,
Ушкăнланса çӳреççĕ ачасем...
Мĕн-ма тесен, пур ушкăнра пĕр вăй.
Çав вăй пуль пулăшать пире ӳсме?
Пĕччен хăварнă йывăç та мăкла,
Пĕччен ача та макăрса тăрать...
Ах, пурăнма тепри тени кирлех,
Тепри пулсан эпир телейлĕрех!
Тен, çавăнпа тăван тени те пур?
Тăван тени ушкăнланни пуль вăл?
Çав ушкăн вăйĕ Турă пек пĕр вăй
Хăй хутлăхне тăвать халь чисти хăй.
Çав ушкăн вăйĕн вăрттăнлăхĕ çав!
Хăйне мĕн кирлĕ вăл, хăех тăвать.
Тен, çавăнпа та çав ушкăнра хăват!?

***

Çеçпĕлçĕсем, çеçпĕлçĕсем,
Черчен те çепĕç çеçкесем...
Пĕри кăвак, тепри хĕп-хĕрлĕ.
Мĕн-ма эсир мана пит кирлĕ?
Ытараймасăр тепĕр чух
Чылай пăхса тăратăп эпĕ...
Çеçпĕл тесен, çеçпĕл тесен
Такамăн та чĕри хускалĕ...
Çеçпĕлпеле эпир пуçланă

Çурхи кунсем пек пурăнма...
Мĕн чухлĕ пулĕ, тен, ăмсаннă
Пыл хурчĕ пек пулма тата...
Çеçпĕлчи пек куратăп эпĕ
Чăваш хĕрне сăнланă чух.
Епле черчен те çепĕç чунлă –
Вĕсем килеççĕ тепĕр чух!..
Анчах тĕнче ытла хăрушă...
Ярса илет те вĕсене –
Çеçкен-çеçкен татса та тухрĕ
Пĕр хĕрхенмесĕр ку чухне...
Çапах та хальлĕхе пĕтмен-ха
Çурхи чечекĕн иленки.
Мĕнле ăна пăхса илмесĕр
Эс вăй тупатăп терĕн-и?

* * *

Хăва ӳссе ларнă шыв хĕрри,
Мĕне ас илтерчĕ тетĕр-и?
Чисти пĕр ача пек шыв тени –
Кăлтăр-кăлтăр кулчĕ ун юххи.
Шыв хĕрне пырасчĕ шыв ĕçме,
Ӳпĕнсе пăхасчĕ çав ача сăнне...
Ах, ун тутисем те чисти пуль çыран,
Ун усси те тухнă, ак, куран!..
Вĕлтĕр-вĕлтĕр вĕрчĕ çурхи ăшă çил,
Хăвана вĕçтерчĕ хулли ӳснĕ май.
Эпир ӳснĕ вăхăт халь тин ним те мар,
Шыв кăна юхать халь çулсем май!

* * *

Тăр-тăр-рр! илтĕнкелерĕ
Улатакка сасси.
Çав кайăк тĕрĕслерĕ
Вăрман çирĕплĕхне.

Пырса пăхсан куратăн –
Ку йывăç мĕн хăрать!
Улатакка хăй майлă
Унта тăмха çапать.
Апла, вăл ирĕк панă
Çав йывăçа касма.
Эп халь унпа туслашрăм –
Эп халь улатакка!

***

Утти ман, утти, атьсемĕр –
Ытла та эп хыт уксахлап!..
Инкек килессе пĕлмесĕр
Пĕр çамрăк, эс пăх, ыткăнать.
Тен, эп те çапла вĕçсе пынă,
Вăй пулнă-ха та çамрăк чух!
Ак, халĕ вара утса тухрăм
Çав пĕтнĕ çулпах тепĕр хут.
Анчах та эп халь ĕнтĕ урăх.
Ура уксахлать ман хытах!
Эх, пулнă çав эпĕр сурăх –
Пăхсан та курман ватлăха!..
Ак, халĕ ман пĕтнĕ ура та –
Чылай ыратать пĕр тĕлте...
Мĕн-ма эп ăна упрамарăм,
Пит хытă чупас-ха тесе?
Чупса эпĕ тухрăм, чăнах та,
Çав пĕтнĕ пĕр çул хĕррипе.
Анчах та ăçта-ха хăватăм –
Вăл юлчĕ пулас çул çинче.
Халь, акă, утти ман, уттийĕ
Ытла та вăраххăн тухать.
Эх, пулнă пулсан кун çутийĕ –
Тепре эп пĕрех чупкăнлап!

* * *

Мĕскер тапса тăрать шалтан,
Мĕскер чуна ман пăлхатать?
Сип-симĕс çулăм ялтăрсан,
Мĕн пур вăрман çунма пуçлать!
Ах, Тур, пăхма та çуккă-çке,
Чечек куçа йăмăхтарать.
Ак, хурама та çеçкере –
Хурăн вăрри мĕне тăрать!
Кăчкăланса, кăтраланса
Тĕнче çитсе пырать пулас?
Çапла çав темскере курсан,
Темскер пурах, тесе калан.
Анчах мĕскер-ши вăл темскер,
Пурнăç таппи-ши, тен, пĕлсен
Эс ху та пулăн тĕмеске!
Пĕр çын пырса ларсан вара
Пит ăсланса каять пуль те
Мĕскер-ха ку текелесе,
Çав тĕмескен курăнкалать...

* * *

Çулçă сăмахлă хурăнпа
Тупатăп эпĕ пĕр чĕлхе.
Сип-симĕс тумлă тĕнчепе
Эп калаçатăп çил пекле...
Мĕнле вара, ун пек тума
Хурăн пекех вĕт пулмалла?
Пулатăн çав, хăвна тупсан,
Çав хурăн пек кăшт шавласан...
Сăмахĕ унăн çулçинче,
Вăл калаçать пек çил çинче.
Ун шухăшĕ ун тĕсĕнче,
Хĕвелпеле вылянинче...
Илтме кĕлт вĕренесчĕ те.

Тен, çавăнпа пырса тăратăп
Эп ун çумнех. Ак, таянатăп...
Епле эс хурăн, шавлăскер.
Е, мĕн тетни, ӳсе пыратăп,
Турат çумне турат хушатăп.
Ачасене вĕçтернĕ чух
Пушшех шавлатăп питĕ шух!
Ман шухăшăм ансат-ансат,
Сăмахăмсем таса-таса...
Калатăп эпĕ çын пекех –
Тĕнче сăмахлă пĕтĕмпех!

* * *

Кая юлса çитрĕм пуль –
Эп тахçанах килменччĕ.
Вăрман çийĕн вĕçрĕ чун –
Кун пеккине пĕлменччĕ.
Мĕн-ма-ха тесен, ку
Чун ăшĕнче пулчĕ.
Эпĕ тăраттăм ку чух
Хам та юман шутлă...
Ӳсрĕ пулать манăн та
Кукăр пулсан та туратăм.
Эпĕ те халь тăхăнса
Çӳретĕп таса симĕс тумлă.
Эх, çил тени, çил тени!„
Мана та пуçран ачашларĕ.
Кукăр турат текенни
Парăс пекех хускалчĕ.
Эпĕ те – вĕçрĕм те кайрăм –
Вĕçетĕп тӳпе таран!
Çук, вăхăтра пуль çитрĕм –
Çулçă саран вăхăта...
Сартăм та, чунăм сипленчĕ –
Вĕçрĕм çапла юман пек.

Эсĕр курса-и, тăванăм,
Юман та вĕçет карап пек.

***

Укçа пама пултăм эпĕ...
Мĕнле-ха эс памăн ăна?
Вăл манăн юлташ, чун тĕрекĕ,
Эпир унпала пĕр çырма...
Çырма тĕпĕнчен эпир тухнă –
Пĕр шывăн вĕт пур ик çыран.
Ак, халĕ каллех тĕл пулнă –
Пĕр пĕчĕк пĕр хумлă шыв,,,
Тапах эс, чăвашăн çăлкуçĕ –
Пĕрне пĕри хыт пулăшни.
Эпир халь çĕр хут та пуль вăйлă –
Мĕн-ма тесен, эпĕр шыв!

***

Тĕнчере алхасать пĕр пушар.
Тĕсесен те ăна эс курмастăн...
Кăшкăрать кашниех: «Хурах!
Мĕншĕн эсĕ мана пулăшмастăн?»
Ун та кун пăхкалать тепĕри.
Мĕн курмастн-им, ман чунăм çунать.
Вут çунать те юлать пуленки.
Вăл чăнах та халь кăмрăк пулать.
Эх, атьсем, ку тĕнче çуннине
Эсĕр пĕртте курмастăр пулать –
Çунса кайрĕç тăван уй-хирсем,
Çунса кайрĕç пулас чăвашсем.

***

Тĕлĕнмелле хаваслăх пур
Çак çутă тĕнчере.
Анчах мĕн-ма-ха тепĕр чух

Тăван та чĕлхере.
Иртсе пырать вăл, савăнать,
Чĕри те пуль юрлать.
Кăштах кăна куç хӳрипе
Çынна вăл ывăтать.
Эп кайрăм ывтăнса вара,
Е юлтăм-и пулать?
Вăл иртсе кайрĕ, мĕн тăван –
Кăштах сăвă çыран!

* * *

Сиренлĕ çул. Ик айккипе сирень.
Пĕр çеçкине татса пăрахнă мĕн...
Выртать пĕччен. Ытла та пит кичем.
Такамăн чĕрине çапла пĕтернĕ, тен?
Пуçлать пек çумăр йăскама каллех,
Тĕтре кăваккăн хăпарать çӳле.
Утма мана аван. Ман сунчăк пур çӳлте.
Пĕлĕт пекех тăкать тавра хăй çумăрне.
Пĕр шухăш çеç пуçра. Çапла кăштах утсан,
Тĕнче хĕрне ним мар утса тухан!
Çын ĕçĕ те çапла. Кăштах кăштăртатсан,
Ĕмĕрлĕхе лартатăн пĕр кермен...
Аван, аван, апла пулсан аван!
Пурнатпăр-ха, апла, çумăр пекех кăптăртатса –
Сиренлĕ çул çине эпир утса тухатпăр!

* * *

Çăлма никам та шутламасть-тĕр.
Çăлма ниме те кирлĕ мар!
Эпир пĕрех кунта юлмастпăр,
Пире кĕтет темле пĕр рай...
Тен, çавăнпа ним шутламасăр
Эпир пурнатпăр ку чухне.
Çук, хальлĕхе эпир каймастпăр

Автан сассисĕр пĕр çĕре...
Эпир вилме вĕт шутламастпăр.
Пурнатпăр-ха, тенĕ чухне
Сасартăк йăванса каятпăр
Чупнă чухне, чупнă чухне...
Вара, тен, çăлăнăç килет-тĕр –
Анчах никам та кирлĕ мар!

* * *

Авалхи шăпчăксем юр юрлаççĕ.
Çук, пĕтмен-ха йăлтах вĕсем.
Ним пулман пек каллех чăплатаççĕ.
Ас илеççĕ пулех. Эх, туссем!
Ас тăватри, ун чух аслă чӳкчĕ.
Чĕре туйлăччĕ пуль ал-ура
Çак çырма тăршшĕпех çыхланатчĕ
Çӳллĕ курăк та... тĕкĕл-тура!
Утнă чух пĕрлешетчĕç ик чун та.
Эх, епле пĕрлешмесĕр тăран?
Чĕрери, сан ӳтри таса юн та
Çакă шăпчăкăн пек, мĕн тăван?
Эс юрла халĕ, шăпчăк, ан чарăн,
Чăплаттар авалхи вăхăта.
Эх, мĕн-ма чуп тума эс тăхтарăн
Сар хĕре утнă чух çавтăнса?
Çавăн чух чарăнатчĕ пуль шăпчăк,
Чарăнатчĕ пуль çĕр çаврăнма?

* * *

Эп кун пек сукмаксем
Тек курманччĕ...
Тăршшипех сарă-сар чечексем...
Пĕринпе эс утма та пулсаччĕ
Çавтăнса çамрăк чух...
Ак, пыратăп утса çамрăк пек.

Ывтăнаççĕ кăна чечексем!
Ах, пĕрне те пулин ас тивесчĕ –
Иртсе кайрĕç пуль çав вăхăтсем.

***

Çĕр çисе ӳссе çитсессĕн,
Хамăр та çĕр пултăмăр.
Çĕр пулса выртсан-выртсан
Курăк пулса ӳсрĕмĕр.
Курăк лайăх, питĕ вăйлă –
Хамăр та вăйсăр пулман!
Курăк тăрăх çӳресессĕн
Выльăхсем ӳсрĕç нумай!
Выльăх лайăх. Кил картийĕ
Выльăхпа тулса тăрать.
Ачасем те пурăнаççĕ –
Кашниех тутă пулать!
Çĕр çисе каллех ӳсеççĕ
Халь тин манăн ачасем.
Эх, çавна курса тăмашкăн
Чун та панă вĕт мана.
Çав чун мар-и çавăрттарчĕ
Пурнăç çаврине тата?

***

Чун тени – мĕнле çук пултăр?
Чун тени вăл – çавракa!
Халь тин çеç манран-и култăр? –
Кайса ӳкрĕр çаврăнса.
Эх, пăхса выртатăр халĕ –
Çурма пĕлĕт, çĕр те çур.
Çавăн пек вăл чун хавалĕ –
Тепĕр майлă тыт та хур!
Вара пулчĕ çаврака пек.
Чун тени – пĕр çавра çĕр.

Чун тени мĕнне пĕлес-тĕк,
Çĕр çине выртса эс кур!

* * *

Сиренлĕ çул. Ача чухнех
Таçта иртсе каяттăн мар-и?
Мĕн чухлĕ пуль сана татса.
Эс татнăçем ÿсеттĕн мар-и?
Мĕн чухлĕ пуль хĕрачине
Сирень хуçса паман-ши эпĕр?
Тепĕр чухне вил тăприне
Сиреньпеле витсе те курнă...
Сирень, сирень, эс тухнă чух
Мĕн-ма пулать-ха питĕ шух?
Таçта санра пур пысăк вăй,
Таçта шалтан çутатрĕ те,
Çул хĕррипе уттарчĕ те
Асра хăварчĕ... Çакă кун
Хăйне пĕлсе килет пуль те.
Сирень пекех хĕвелĕ те,
Сирень пекех халь хĕрачи! –
Халь йăлт чечек пек, пĕлтĕр-и?
Сирень тени халь хăй тĕнче.
Сирень тени сан чĕрере...
Сирень пулса каятпăр та,
Сирень пулса килетпĕр те –
Сирень пекрех халь эпĕр те!

* * *

Пилеш палăра пуçларĕ...
Пилешĕн те пур çеçки!
Халь мĕн вăл мана каларĕ –
Эс мар-и-ха унăн çеçки?
Çÿлтен вăл пăхса сулларĕ
Çил майăн кăна тăррине.

Çиле хирĕç тăчĕ, памарĕ,
Памарĕ вăл хăй çеçкине.
Ăт, халь ун çырлийĕ тухнă.
Шип-шип! текелет майĕпен.
Пилешĕн çеçкийĕ хухнă –
Çырлийĕ тухать хĕвелрен.

* * *

Кĕтсе ларатăп... Мĕн тесе
Кĕтсе ларатăп халĕ?
Пĕр каласа, пĕр итлесе
Пурнăç иртет те мар-и?
Пуласчĕ халь çут тĕнчере,
Пуласчĕ кайăк майлă.
Кайăк вĕçет пек пит инçе...
Ман та инçе пуласчĕ!
Кĕтсе ларма аван-ши вăл?
Çывраççĕ, акă, ачасем...
Çак тĕнчере кĕтни аван...
Мĕне кĕтеп-ши эпĕ?

* * *

Ёнерхи тăвăла эс курмарăн...
Вăл хупларĕ вĕт çак тĕнчене!
Çут çанталăк пит сиввĕн сывларĕ,
Хĕрхенмерĕ мĕн пур тĕмсене.
Акă, чăн та, ирпе эп пыратăп.
Темĕн чухлĕ çӳп-çап çул çинче.
Йывăçа пĕрне, акă, куратăп,
Çурса янă пулас çурмаран...
Çавăн пек тепĕр чух çанталăк
Кăтартать-ха халь хăйĕн вăйне.
Тепĕр талăк пек иртрĕ те – халĕ
Пурте пур çакă çут тĕнчере!

***

Çĕр çырли тапса тухнă, пĕлетри?
Тепĕр чух питĕ лайăх курнать.
Хĕрлĕ-хĕрлĕ уçланкă пекрех-и
Çак тĕнче те тепре савăнать.
Эх, выртатăн вара çĕр çырли пек
Йăванса та кайса çĕр çине.
Мĕн тума, тет, мана халĕ кирлĕ
Çĕн укçа та сип-сив кĕркунне?
Ку çулла та пит лайăх, пĕлетри?
Пĕлĕтлет тепĕр чух ним те мар!
Ун чухне çĕр çырли аври евĕр
Çутатап ĕшнере хама май.

***

Кала-ха, кала... Каламастăн.
Каларĕç те... Кавăн, терĕç.
Лартасчĕ кăна вута!
Эх, çав кăмака, тем пекехчĕ.
Пиçсе эпĕ тухăттăм. тен?
Ун чух эс çисе пăхсассăн,
Мĕн калăн вара? Тепĕртак
Кала-ха, кала... Каламастăн
Ку, тутлă тесе çинĕçем.
Çапла çав, тăванăм, эс, кавăн.
Эс кавăн пулсан, мĕн калан?

***

Тĕрлĕрен пулать çырма
Ку тĕнче çинчен.
Çавăнпа та тĕрĕрен
Эп пуçлас-ха терĕм.
Тĕрĕ, тĕрĕ, теç. Тĕрле,
Кам чарать халь, тетĕр?
Тĕррине пуçланă чух

Ху та мĕн-ха, тетĕр?
Акă, чăн та, пĕр тĕрре
Эсĕр халь пĕлетĕр.
Мĕнле тĕрĕ тесенех
Хĕресле ку, тейĕр.
Тен, ку тĕрĕ тени мар.
Ку, асаплă пурнăç!
Иртсе кайрĕç, юлчĕç халь
Пирĕн тĕрĕсем çеç.

***

Сарă, сарă, çутă чечексем,
Ĕнер çеç тухманччĕ-ха вĕсем.
Акă халь мана кĕтсе илетĕр,
Эп кунтан та иртнине пĕлетĕр.
Сарă, сарă, çутă чечексем...
Пĕчĕк чух тататтăм-ха пĕччен.
Паянтан тем пулчĕ, иртрĕ,
Чечеке татмалăх кăмăл пĕтрĕ.
Иртрĕ манăн юрату тени.
Сар чечек, мана кĕтетĕн-и?
Эсĕ çеç мана, пĕлеп, кĕтетĕн.
Эпĕ иртнине таçтан пĕлетĕн.

***

Пĕр ватă çын
Унта-кунта.
Пĕрмай çӳрет вăл
Ман умра.
Вăл пĕр сăмах та каламасть.
Анчах та эпĕр калаçатпăр...
Епле-ха, тетĕп. Эпĕ те
Çапла йăлт ватăлса çитетĕп.
Вара утап
Унта-кунта.

Пӗрмай ҫӳретӗп
Сан умра.

***

Тата мӗн куртӑм-ха, тӑванӑм...
Пиҫсе ҫитет акаци ман.
Кӑшт туратне авса пӑхать
Вӗҫме те хатӗр вӗрене –
Сӑмсаллӑ унӑн вӑррисем.
Вӗт кайӑк юрлама пуҫларӗ.
Аван, теет, пуль пурнӑҫне,
Е мӑшӑрне вӑл йыхӑрать...
Часах паян та пӗлӗтлет.
Вара, тен, ҫумӑр ӳккелет.
Ӗнер те ҫапларах тӑратчӗ
Нихҫан сӳнми таса ҫанталӑк.
Паян та, акӑ, ват юман
Кутне тӑкать пек хӗрлӗ юм.
Ун айӗнче ӑш кӗрӗк евӗр
Ларать-ха шӗшкӗ сарӑлса.
Ун мӑйӑрӗ кӑҫал ҫукрах.
Пӗрех куҫа вӑл илӗртӳллӗ –
Час пуласса пек пӗлтерет.
Ҫапла кунта пӗр пӗчӗк хутлӑх,
Пур тӗнчере кун пек те уҫлӑх.
Чӑнах, эп курнӑ таврара
Ман чунӑм пурӑнать вара.

***

Ҫанталӑк пек эс тӗрӗле...
Темскер ҫырас тесе ан тыт
Пӗр карандаш та, тучка та.
Килет-тӗк кӑмӑл майӗпен
Кӑлар ӑна ҫак хут ҫине.
Пӗчӗк ачи те, пысӑкки те

Вулатчĕр вăхăт пур чухне...
Кунта темскер эп курни мар-и?
Кунта çапла, çаплатчĕ-çке!
Чун савăнать пĕрле пулнишĕн,
Пĕр пек куçпа пăхма пĕлнишĕн...
Ăт, тепĕр чух çапла чухне
Эс ху та çыр пĕр-ик йĕрке.

***

Ним çинчен те ан шутла.
Эсĕ ху кăна.
Иртсе кайнă çын унта
Калĕ тем те пĕр.
Эс вара кунта тăр-çех.
Тăр, чĕр курăк пек!
Эх, тăрсан-тăрсан вара
Пулăн ху кăна.

***

Ну, çиттĕр, çиттĕр –
Çитрĕ çу.
Паян вĕт ăшă кун.
Ĕнертенпе çăвас пекех
Юрать-ха пĕлĕт пур.
Эп куртăм, темшĕн ку тĕнче
Эс пуррипе çеç пур.

***

Эп çырма пăрахрăм...
Ним те мар пек халь.
Ним те шутламастăп –
Пурăнма аван!
Пĕрре пăхрăм, иккĕ –
Пурте пĕр пекрех.
Мĕн тума, тет, кирлĕ

Сăвăри чечек?
Пурăнма пит лайăх
Ним те çук чухне.
Ак, çырма пуçларăм,
Лартăм чечекле.
Ун чухне, куратăн –
Пурнăç сăвă пек.
Пурăнас тесессĕн,
Çырса пăх-ха эс!

***

Тап-таса çут уйĕ,
Тап-таса тӳпе...
Çуккă халĕ хурлăх,
Çуккă-çке йăви!
Эс вĕçсе çӳреттĕн
Таса уй-хирпе,
Эс хăвна пĕлеттĕн
Таса тӳпере.
Пĕрре-çех пăхан та
Çӳлти тӳперен.
Мĕн-ха эс куратăн,
Мĕншĕн-ха ӳкен?
Ах, çӳлте аван та
Аялта, тет, мĕн?
Тепĕртак çулсан та
Курăкĕ юлмасть.
Çав ĕçе çӳретĕн
Эс пăхса çӳлтен.
Эс хăвар-ха, тетĕн,
Курăка кунта!
Тап-таса çут уйĕ,
Тап-таса тӳпе.
Мĕншĕн-ха тăри ман
Юрламасть тепре?

***

Ах, вăрттăн шухăшлă чăвашăм,
Ма каламастăн шухăшна
Сана кунта килме вĕт янă
Çӳлти чăн Турă, тупата!
Эс килнĕ те çерем пек уçнă
Çак тĕнчене тепре туса.
Хăвна та пулĕ эсĕ тупнă –
Çын чăн тĕллевĕ – çав кăна!
Эс сухаланă, тырă акнă
Ĕçре шыранă тупсăмна.
Ĕç хыççăн, паллă, савăнтарнă
Юр юрласа та ташласа.
Халь ĕнтĕ мĕн-ха, эс шутланă,
Тур хушнине пурнăçласа?
Çук, çук, сана татах та панă,
Хăвна татах кăтартмалла.
Анчах та эс хăвна тумалăх
Ху халăхна та пуçтарман.
Хăçан, хăçан тата хăварăн
Ачусене ху хыççăнтан?

***

Çавăрттартăн эс, кăшт çавăрттартăн,
Тĕнчене тупрăн эс çавăрса.
Çаврарах хамăра туптар-и,
Пурăнмалăх тата пурнăçа?
Халь тинех пурте пур-тăр пулĕ?
Мĕн тума, тет, халь мана укçа?
Çаврара, чăнах та, чăваш мулĕ,
Ытти вăл пулать пуль мур кăна.
Çавăрттартăм эп хама тĕнче пек.
Çавăрсан та çавăрсан кăштах

Çын пекех эп пултăм пулĕ хам та? –
Ма тесен, эп çавăрап хама.

***

Ытла та хăвăрт ÿснĕ
Утти ку çаранра.
Пĕри, ак, кур-ха, тÿснĕ
Сукмак хĕрри пулса.
Тем чухлĕ шур чечек те,
Тем чухлĕ пур сарри.
Çаран тени пĕлет çав,
Тупать хăйне валли.
Пыл хурчĕ те сĕрлет, ав,
Йăлтах пĕтĕçтерет.
Хăлха çавна илтет те –
Татах пурнас килет.

***

Вĕттĕн-вĕттĕн çумăр çăвать,
Хура çĕре шуратать.
Калăн, тÿпен куççуль тухать,
Хăйĕн куçне тасатать.
Эп те утрăм çумăр айĕн,
Тасалас-ха, терĕм-ши?
Анчах пурнăç урăхла мĕн,
Çумăр çуни куççуль мар!
Вĕттĕн-вĕттĕн çумăр çăвать.
Манăн чуна хуратать.
Эх, кам тенĕ тасатма та
Хăй урине варалать?

***

Чĕмпĕрленчĕç хĕрсем, хитреленчĕç.
Халь тин пысăк вĕсем тĕнчере.
Ма тесессĕн, вĕсем хатĕрленчĕç

Нарспирен те çӳле çĕкленме.
Малтанрах вĕт нимех те марччĕ,
Палламан пĕр хĕрсем кăна.
Халĕ пăх-ха, епле капăрланчĕç,
Хĕм сапаççĕ вĕсем çăлтăрла.
Ах, пĕрне те çулса илесчĕ,
Чăмăртасчĕ сĕткен тухиччен.
Çакă пултăр-и Чĕмпĕр сипечĕ,
Эс çапла-и чуна сиплен?
Чĕмпĕрленчĕç хĕрсем, хитреленчĕç.
Халĕ тин манас çук нихăçан.
Чĕмпĕрте, тет, чĕне сӳтеççĕ.
Эпир явăпăр, тен, тепĕр хут!

***

Евĕрлерĕм сана эп, тăванăм,
Сан пекех туса пăхрăм йăлтах.
Пĕрре култăм та, тепĕр хурлантăм –
Пăхса тăчĕ тĕнче те шăпах!
Эс те чăн тĕкĕрленнĕ пек пултăн,
Тен, эп пултăм чăн тĕкĕр хамах?
Сан пекех ман чĕре те чулăн
Авăра халь сикет татах!
Евĕрлен, евĕрлен-ха артисăн,
Тен, халь эсĕ пĕр сцена тăван?
Çавăнпа-ши мана эсĕ сисрĕн,
Çавăнпа авкалантăн татах?
Ыталарăм сана эп, тăванăм,
Чĕрепе те пулин... Эс асра!
Эх, санра пулĕ манăн хăватăм
Халь те пулĕ тапса палăрать?

***

Çап-çут ана... Утса килентĕм,
Пăхса тăратăп пĕр кана.

Эп савӑнма кунта килетӗп –
Мӗн-ма тесен эп хам ана!
Эп ҫакӑнта ӳссе ҫӗкленнӗ...
Ачаранпа ҫак ҫут ана
Мана чунран пырса тиветчӗ –
Эп ҫисе ӳсрӗм пуль ӑна?
Ӑнах та, акӑ, эп ҫиетӗп
Чие ҫырли те хурлӑхан...
Ана ҫисен, эпӗ пӗлетӗп,
Эп хам та пулӑп пит таса!
Утса килентӗм... Ман ана
Пӑхса выртать анне пек ҫуттӑн...
Ҫав ҫутӑ пуль мана ҫӗклерӗ,
Ҫын пек кӑтартрӗ такама.

* * *

Тӗлӗнмелле пӗр пулӑм
Хуҫаланать чунра.
Хама эп халӗ куртӑм
Таҫтан пек аякран...
Ак, халь утса пыратӑп,
Пӑхатӑп – эп хуҫа!
Эп халь кунта лартатӑп
Тем тӗрлӗрен пахча.
Кунтах пулать йӑранлӑ
Нумай-нумай чечек.
Тепӗр ҫултан, тен, пулӗ
Ӑш витере ӗне?..
Сӗрлет садра халь вӑйлӑ
Пыл хурчӗсем пӗр пуҫ.
Апла, пурнатпӑр эпӗр
Татах та лайӑхрах...
Эх, ҫаврӑнать халь пурнӑҫ
Хуҫалӑхӑм тавра.
Ҫавна пӑхса ҫӳрет халь

Ман арăм та кунта.
Часах, алли ун çăмăл,
Илем кÿрет татах...
Çавăнпала çак пулăм
Хуçаланать чунра.

***

Манăн пурнăç пĕр çавра кăна.
Çаврăнса пăхма та вăхăт çук!
Тин кăначчĕ эпĕ пĕр ача,
Халĕ тин вара пĕр ватă çын...
Мĕн тума, тет, халĕ кирлĕ пулчĕ
Çаврасем çинчен кăшт шутлама?
Çаврăнать халь пурнăç хăйне майлă –
Çав çавра çинче ларса эс пыр!
Илсе кайтăр вăл сана таçта çити.
Таврăнмастпăр эпĕр тепĕр хут!
Таврăнсан та таврăнать çавра кăна –
Çавра пек пулсан эс ху та пур вара!..

***

Ĕлĕкхи пек каллех пиçессĕ
Куç умне ÿкнĕ çупкамсем...
Кун иртнĕçемĕн хĕрелессĕ
Сип-симĕс пулнă çырласем.
Ача чухне ăна татсаччĕ
Çупкам-çупкамăн хам валли.
Мачча тăрне çакса хурсаччĕ –
Кайран сисе çăвар тулли!
Çаплаччĕ çав ачалăх кунĕ –
Эпир ÿссе çырла çисе!..
Мана каллех пилешĕн хумĕ
Пырса çапать те тĕсесе
Пăхса тăратăп, тем тăваслăн...
Халь тин çиместĕп эп пилеш!

Анчах та тахçанхи хаваслăх
Çĕклерĕ чĕрене хуллен.
Халь ĕнтĕ эп те пурăнатăп...
Пилешĕм пур ман... Мĕн вара?
Çав пилеше çисе пăхатăп,
Вара пулатăп пĕр ача!

***

Паянтанпа çырма пуçлатăп
Çак кулленхи пурнăç çинчен.
Хам пурнăçа эпĕ куратăп
Хĕвел шевлиллĕ хум çинче.
Юхать ман пурнăç юхан шыв пек.
Икĕ енчен икĕ çыран...
Такам унта пырса пăхсан та
Нимех те курмĕ паянтан.
Мĕн-ма тесен эпĕ пытартăм
Сив çил çĕкленĕ çӳл хума...
Эп питĕ майĕпен юхатăп,
Тытса пăхаймăн эс мана.
Юххи те çук, шыв хумĕ те...
Çыранĕ те пит курăнмасть пуль.
Анчах та тепĕр чух, куратăн,
Çав хум çапать çыран çине.
Ун чух ман пурнăçăм кăра.
Ăна тытса чарма та çук!
Çавăн чухне эп курăнап
Чăнах та юхан шыв пекрех...
Ахаль чухне ман ним те çук.
Пит лăпкă кӳлĕ пек выртап.
Паянтанпа çав кӳль çинчен
Кашни кунах кăштах çырап.

***

Иртет çав вăхăт... Çак самант

Мĕнпе тулса килет-ши, тетĕп?
Е ахалех вăл çухалать?
Юхать вара тĕнче хăй тĕллĕн...
Енчен те эп çак саманта
Чунпа вĕрсе те çĕклесен...
Ун чух вара ку вăхăт та
Ахаль иртмест-ха пулĕ тетĕп?
Алра пĕр сăвă пур халь тин.
Ăна эс вуласа киленĕн...
Çав сăвăри йĕркесенче
Самант тени те пур-тăр халĕ?
Çапла пуль çав, самантăм манăн,
Эс ан çухал ман умăмран.
Ун чух вара тĕнче çуралĕ
Пĕр самантран, пĕр самантран...

* * *

Кĕрхи кунсем килсе çитсен,
Эс мĕн çинчен шутлатăн-ха?
Çулçă пекех ӳсе çитсен,
Сив çил çинче вĕçетĕн-ха!

Вĕçетĕп эпĕ çулçă пек
Пĕтсе çитес чухне.
Ялт! ялтăратăп çутă пек
Хĕвел çинче тепре.

Кĕрхи кунсем, пĕлетĕр-и,
Тепĕр чухне пит муллă-çке.
Хăвна туятăн... Тухрĕ-и,
Сан витĕр çак тĕнче вĕçсе?

Вĕçетĕп эпĕ çулçă пек
Пĕтсе çитес чухне.
Ялт! ялтăратăп çутă пек

Хĕвел çинче тепре.

Тен, çавăнпа пуян пекех
Хăвна тытатăн тĕпер чух.
Халь ĕнтĕ çулçă чиперех
Вĕçет вăрман çинче.

Вĕçетĕп эпĕ çулçă пек
Пĕтсе çитес чухне.
Ялт! ялтăратăп çутă пек
Хĕвел çинче тепре.

***

Тăхтие асăнса.

Тăхти пекех тăхтамалла,
Çак тĕнчене те курмалла
Кăштах çӳлтен пĕр кайăк пек.
Кантăкласа та тухмалла...
Пулсан та пултăр вăл – пĕр пӳрт!
Таçтан тултан пăхсассăн та
Унта куратăн пĕр йĕрке.
Такам тасатнă пулĕ те
Халь курăнать хĕртсурт пекрех.
Тăхти тĕнчийĕ хăй хĕртсурт!
Ăна ун пек тăваймăн тек.
Илле пăхни юлать унта.
Илле сассиллĕ çав çуртра
Такам, тен, çăмарта кустарнă?
Епле тирпейлĕ те аван...
Апла, вăл хăй те çавăнтах,
Пире кĕтет пуль çав çуртрах!

***

Чечексем, юлашки чечексем
Юлашки пулнăран-ши хитре?

Пĕр хурт евĕр пĕччен майĕпен
Эп ҫӳретĕп вĕсен хушшипе.
Пит хитре те вĕсем, темĕскер
Эп тупатăп хурт евĕр апат.
Мĕн апачĕ – чуна ҫĕклени,
Чечек евĕр ҫутта иленни...
Ҫав туртать пулинех чунăма.
Чечек пек пулас килчĕ-и, тен?
Хурт тени, пултăрах, сăхтăрах!
Тен, халь манăн та тухĕ куҫҫуль?
Сăхса илтĕр ҫавна сарă хурт,
Кăшт ҫутаттăр хĕвел хытăрах!...
Ун чухне юлашки чечексен
Вăй тухать пурăнмалăх татах.

***

Хĕвел ури пуль талса ӳкрĕ
Ура айне ку вăрманта?
Кĕркуннеччен вăл шăппăн ӳснĕ...
Паянтанпа вара – кăвар!
Кăвар пекех выртать ҫап-ҫуттăн
Пĕр вĕрене те ҫумĕнче...
Кĕркуннепе шăнса ҫитсессĕн,
Хĕвел, тен, хутнă кăмака?
Кăмакине хутсан-хутсан
Кăварĕ юлнă ҫакăнта.
Ас ту, асăрханса утсам!
Хĕвел тăкать хăй кăварне
Утма ҫулпа ура айне...
Пĕр хĕрача пăхса тăрать-и,
Ку мĕн вара текелесе?..

***

Ҫумăр ҫума пуҫларĕ...
Мĕн те пулин пулать.

Çил пĕлĕте хăваларĕ –
Пĕлĕт çăвать те çăвать...
Çумăр çусан, пĕлетĕр,
Халь пурăнма пулать...
Эпĕ те çумăр евĕр
Ӳкнĕ пекех тăвап...
Манăн та, ах, ӳкесчĕ
Çак типĕ çĕр çине.
Ӳксен те ӳкме пӳлесчĕ
Пĕр шур чечек çине.
Çав шур чечек, пĕлетĕр,
Питĕ кĕтсе çумăра...
Çумăр çусан килет-тĕр
Пурнăç тени тата.

***

Хĕпĕртесе пăхать хĕвел, –
Тĕнче хĕвелленет.
Хăйне курса вĕренере
Хĕвел хăйне пĕлет.
Епле хитре... Ку туратсем
Хĕвел таткиĕ, тен?
Персе анаççĕ çулçисем –
Тепре çеç куриччен...
Кураймăп тек тĕнче сана,
Çапла хĕвеллĕ пулнине –
Тепĕр кунтан йăлт улшăнан,
Ас илĕн çумăр çунине...
Хитреленсе пăхать хĕвел –
Çутийĕ пит хитре.
Вăрман саралчĕ майĕпен –
Çулçи хĕвел çинче...
Çапла, çак пултăр çут тĕнче
Хĕвел çинче кăна...
Тен, çавăнпа çулçă пекрех

Тăратăп савăнса...

* * *

Пĕр хĕрача çинчен шутлатăп:
Вăл сăвă, тет, çырать!
Ун чунĕ пит хитре, куратăп,
Сăвă пекех шăрçаланать...
Сăвă çырсан, сăвă пулать çав,
Тĕнче те сăвă пек сывлать.
Ун сăввине илтсен пулан, ак,
Тен, ху та хĕр пекех аван?
Аран кăна эсĕ сывлатăн –
Мĕн-ма-ши хам та сăвă мар?
Сăвă çырсан Тур пек пулатăн –
Тен, çавăнпа та юратан?

* * *

Тĕнче çути пуль таврăнать?
Вăрман каллех çунса тăрать.
Тен, вăл каяс чухнехи пек
Тутиййĕпе çех йăлл! кулать?
Çунать тавралăх вут çинче:
Çунать пĕр тополь, вĕрене...
Çак çул çинчи çут чечексем
Кĕркуннехи пуль çутăсем?
Мĕн-ма кĕрхи тĕнче çунать,
Мĕн-ма чуна савăнтарать?..
Мĕн-ма тесен вăрман аван –
Мĕн илнине вăл халь парать!

* * *

Пĕр кăмăл тупнă чух пĕрле
Çырар-ха пĕр-пĕрин çинчен.
Эсĕ çырса тахçан пĕччен –
Эпĕ çыратăп çил çинче!

Пĕччен унта нимех те курмăн,
Пĕлеймĕн мĕн килсе тухать.
Ку çил çинче вара çил майăн
Санăн чуну та татăлать.
Йывăç тени... Чечек тата –
Пур çут çанталăк ман умра!
Халь пурте çил пек авăнать,
Халь пĕтĕмпех çилпе тулать.
Халь ман ăш-чик те çиле май
Пĕр çĕкленет те лăпчăнать.
Мана икке хальхи тĕнче
Ку çутăра та пайăрать...
Çапла пулех, пĕччен тени
Пĕччен çĕртех ку юлтăр-ха...
Çилсем çинче те çырнине
Кăшт çӳлерех çĕклесчĕ-ха...

* * *

Çĕр тĕрлĕ тĕл пулу, çĕршер ăсчах...
Ăçта çитсен те эс шыран хăвна...
Эс чăн та пур, анчах çынра кăна.
Кашни çынра тупан пĕр-ик сăмах.
Сăмах пĕрлештерет пулас пире?
Кирек мĕн каласан та – Турă пек
Тĕнче хăй тĕллĕнех чечекленет тепре.
Апла, эс пул ялан чĕлхеллĕ те хитре.
Çапла шутлатăп эп çак çĕр çинче.
Çынпа тĕл пулăп та – калатăп пĕр сăмах.
Эп пур çак тĕнчере, мĕн-ма тесен,
Сăмахламалăх пур-ха пĕр ăсчах.

* * *

Чечексем ӳссе ларнă чылай...
Пит хитре те, татассăм килет!
Ах, анчах та татсассăн каллех

Хăвна татнă пекех туйăнать.
Мĕн, сахал-им татса та сана,
Пăрахса çĕр çине курăк пек?
Нумай чух эпĕр кайнă пĕтсе –
Йĕр палли те юлман çĕр çинче!
Халь тинех татас çук чечеке.
Чечекрен те черчен ним те çук!
Халь пĕтес пек тăрсан çул çинче,
Чечек пек эсĕ пул тепĕр хут.

***

Шухăшламалăх пур чухне
Пĕр шухăш та килмест.
Ытла аван та, кĕркунне –
Чечекленме пĕлмест!
Тепре çех çуркунне пекрех
Пулса курасчĕ ман.
Ăçта, çак пĕтнĕ пек çĕрте
Шăтса тухасчĕ шалт!
Ак, ку мĕн-ма-ха çак тĕлте,
Мĕн-ма шăтать тесе,
Пăхса та тăрĕçĕ çынсем
Ача пек тĕлĕнсе...
Анчах май çук çав, кĕркунне –
Курăк пулсан та вĕт шăтмасть!
Шăтасчĕ манăн кĕркунне
Ку, çуркунне тесех...

***

Ниçта кайса кĕме те çук
Ку пурнăç хĕсĕк чух.
Пĕрре кунта та çапăнса
Татах та аташан...
Эх, эс те çав, сан пурнăçу
Кăпшанкă пурнăçĕ пекрех...

Хăвна тупсан та, пурнăçу
Çилсем вĕрни пекрех...
Пĕрех, çил сивĕ пултăр-и? –
Вĕçетĕп çил çинче!
Кăвайт пек хытă çуннă чух
Ниçта кайса кĕме те çук!

***

Çамрăк чухне аванччĕ
Шурă садра çӳреме...
Хĕрачасем нумайччĕ –
Манăн чуна илме!
Халĕ вара ним те çуккă.
Пĕр хĕрача та çук!
Ун вырăнне кăштахçă
Темле пĕр карчăк пур.
Пăхсан та, пăхсан çак мар-и,
Вара çамрăк чух пулни?
Ун çамрăк кунри кăварĕ
Çунать куç харши çинче.
Шап-шур çамкинче пĕр çăлтăр,
Çавна вĕт татса çамрăк чух!
Халь ун вырăнне юлнă
Пĕр пĕчĕк пек шăтăк çех...
Ăт, çав «шăтăкпа» пурнатпăр –
Пире карчăксем те юрать!
Эх, ача чух аванччĕ –
Нумайччĕ ун хĕрача!

***

Ăçтан-ха курма пĕлетĕн
Нихçан тутăхми пурнăça?
Таçта аташсан та килетĕн
Тахçан маннă çак çĕршыва.
Ача чух, ас ту-ха, илемлĕ.

Ачалăх иртсен ним те çук!
Мĕн-ма тепĕр хут килетĕн
Тахçан пĕтнĕ çак вырăна?
Мĕн-ма-ха тесен, пĕлетĕп,
Мĕн-ма-ха кунта килеп.
Мĕн-ма-ха тесен, илетĕп
Эп çамрăк вутне çакăнта.
Çав вут вăл пĕрре те пĕтмен пек
Чунра ялкăшать тепĕр хут.
Анчах та çак çĕршывра çех –
Килет тепĕр хут çак вут!

***

Çĕр çунать...
Çĕр çунать, çĕр çунать!...
Çĕр çинчи симĕс курăк çунать.
Вĕрене те вутпа хыпать...
Çĕр çунать...
Çĕр çинче халь кăвар выртать.
Çут хĕлхемĕ вĕçет çил çинче.
Халĕ сывлăш та пулĕ çунать...
Кашнинчех, ку тĕнче сывласан,
Ман чĕре те татах çунать.
Çĕр çунать...
Мĕн тума ăнланмастпăр ăна,
Мĕн тăма итлеместпĕр ăна?
Мĕн тума çĕр çунать?
Çĕр çунсан – чун пулать!

***

Тĕлĕнмелле пĕр пĕчĕк тупсăм
Ман чунăмра хуçаланать.
Ача чухне кунта эп утнă,
Вĕреннĕ пулĕ, тен, кăштах.
Эп ас тăвап,.. Кунта уй-хирччĕ...

Лартсаччĕ эпĕр йăмрасем...
Халь çав йăмра çиле пуль хирчĕ
Çут уçлăха мĕн ўкиччен...
Çапла, çапла вăл вăхăт иртрĕ,
Халь ватăлчĕç çав йăмрасем.
Эпир вĕт хамăр та... шур витрĕ
Тăнласене çав кунсенчен.
Çапах та эпĕ тĕлĕнетĕп.
Епле-ха эпĕ çакăнтах,
Эп çакăнтах утса çўретĕп,
Эп пурăнатăп çак тĕлтех...

***

Утнăçемĕн килчĕ кун çути...
Вăл мана, тен, палăртасшăн пулчĕ?
Тен, кăтартрĕ хăйĕн асамне?
Чăнласах та, эп хама та куртăм,
Куртăм ку тĕнче мĕнлескерне.
Пур унта, чăнах та, чăн асамлăх.
Кун çути вăл хăй пĕр Турă пек
Утнăçем мана йăтса кăтартрĕ –
Эп инçет хĕрне çитмерĕм-ши?

***

Пĕр уçăлу пур çакăнта,
Пĕр пĕчĕк çеç уçланкă.
Пĕчĕк чечек пек çакăнса
Тăрать-ха пĕр çупкамçă.
Çав çупкама тытса пăхсан –
Эс ху та çут çанталăк.
Мĕн-ма тесен, эс вĕт ăна
Çупкам татса уçатăн...

***

Çутатайрĕ мана кĕрхи кун.

Эп çуталтăм пĕр сар вĕрене пек.
Халĕ тин вăранать манăн чун,
Халĕ тин çулçă пек эп вĕçетĕп...
Тахçанах çурхи кун шевлипе
Вăрансаччĕ ман чун пуçласа.
Ун чухне кăларсаччĕ çеçке,
Ташласаччĕ ун чух вĕрене...
Çу та иртрĕ, эп ӳсрĕм кăштах –
Манăн вăррăм та пур пурăнма!
Халь тинех эп татах вăранса,
Эх. пурнасчĕ-ха, теп, ташласа.
Çутатайрĕ мана кĕрхи кун.
Эп çуталтăм пĕр çак вĕрене пек...

***

Çак хĕр çинчен мĕн калама
Пултарăп-ши тата?
Эп турă мар та, çын тума
Пуçлайрăп-ши вара?
Хĕрсем вĕт халĕ, курăк пек,
Йăлтăртатса ӳсеççĕ.
Курăк çулма килекенсем
Ах, вĕсене кураççĕ...
Пĕрре çеç «савĕç» çавапа –
Вăшăлт! çеç касăлаççĕ.
Мĕнле сире те сыхласа
Кăштах та хăварасчĕ...
Çак хĕр çинчен мĕн калама
Пултарăп-ши вара?
Пĕр хĕр пулсан, ман хамăн та
Курăк пуласчĕ-ха!

***

Пысăк, чаплă мăн çынсем
Ман çине пăхаççĕ.

Çавăнпа та ватсенчен
Эпир пит хăратпăр.
Вĕсенче вăй-хал пурах!..
Хăйсем кайнă пулĕ те –
Кунтах пурăнаççĕ пек...
Вĕсем тунă мăн ĕççем
Халь те курăнаççĕ тек.
Çавăнпа та куçĕсем
Пире хыт сăнаççĕ.
Эс пĕлетĕн-и пире,
Тенĕ пек калаççĕ.
Çук. пĕлместĕп, тесенех
Пире, ай. вăрçаççĕ.

***

Питĕ ăмăр кунччĕ –
Çумăр ӳккелет...
Асăмрах-ха пурччĕ
Çуллахи пĕр кун.
Эх, çулла аванччĕ
Аслă вăрманта.
Тункати те пурччĕ
Савăнса ларма.
Халь вара утатăп –
Сукмак кĕске мар!
Шухăшпа ларатăп
Ывăнсан пĕрмай...
Эх, çулла аванччĕ
Уçăлма тухма.
Хăвна эс туяттăн
Темле паттăрла.
Халь вара тем пĕтнĕн
Туйăнать ăшра.
Пурпĕрех тем кĕтнĕн
Ларчĕ тунката.

***

Ик айккипе сап-сарă,
Сап-сарă пĕр вăрман.
Умра кавир пек сарнă
Утма çул пит аван.
Çӳлте чĕлтĕртетеççĕ
Ӳкес пек çулçăсем.
Мĕн ӳкнисем вĕçеççĕ –
Пур пулĕ тӳпесем?
Сап-сарă çулçă сарнă
Сукмак ӳкерчĕк пек...
Такам унта хăварнă
Хăй хĕлхемне çĕрле...
Хĕлхем халь сырăнать те
Вĕçет таçта çӳле.
Ман ӳтĕм те çапла пуль
Туять кĕрхи çиле?..

***

Тĕттĕм яка пĕлĕтрен шуса тухрĕ
Сап-сарă пĕр кун, кĕрхи кун...
Тĕттĕм вара майĕпен кăна хухрĕ –
Ун вырăнне халĕ пур çутă кун!
Кил-ха, апла, çутă кун хăвăртрах эс!
Яр, сапала çуттуна таврара.
Ун пек тусан, эп тепре пурăнап пек.
Çавă сан пултăр ĕçӳ, çавăрттар!
Çаврăн татах çулçă пек çиле май,
Кĕрхи вăрманпа пĕр кавар эсĕ пул!
Юлччĕр таçта тĕттĕмри пĕлĕтсем те,
Пĕттĕр унтах тахçанах хăрани!..
Халĕ кунта чăнласах та кун килчĕ,
Килчĕ хура пĕлĕтсем хушшинчен сарă кун!

* * *

Пăхать, пăхать таçтан асамлăн –
Вăл асамлать пуль халĕ те?
Тахçанхисем халь çаврăнса та
Пырса тивеççĕ ман чуна...
Эс каласа: «Вырăс пулар-ха.
Вырăс пулсан, тен, пурăнан?
Чăваш пулса тăрсан, тăхта-ха,
Эс тĕнчерен вĕт йăлт юлан!»
Çапла каланă эс, мăнтарăн,
Ху халăхна пĕтернĕçем.
Халь мĕн тата тытса хăварăн
Ним çук чухне чăвашлăхра.
Сар хăйăр пек вĕт шуса тухрĕ
Халăх тени сан аллунтан!
Кăшт курăнмалăх та юлмарĕ
Ача тени ку хулара...
Пăхан, пăхан-ха асăнмалăх.
Тахçан пулса пуль халăху?
Анчах татах пăхса ларсассăн,
Юлмасть манра ку тарăху!

* * *

Ку тĕнчене улăштарма пулать пуль.
Ак, асăрха-ха, эс малтан аван, пĕр майлă
Пăхкаласа çӳрен, аван, аван тесе...
Унтан темскер çитмен пек авăнан та
Çук, кун пек мар! Тен, урăхла тăвар-ха
Текелесе чуна улăштаран...
Ак, халĕ пăх-ха, йăлтăртатать тĕнче
Пачах урăх çутпа. Аван тени аван та
Тата авантарах та пур иккен кунта.
Çапла улăштарма пулать пуль хăвăрт
Çак тĕнчене кăштах авăнтарса...

***

Пĕрре кăна санпа çураçтарасчĕ,
Пĕрре кăна пăхсамччĕ ман çине...
Анчах та йывăç хăй пурнасшăн,
Пăхсан та пăхрĕ çиле май кăна.
Вăл çилпеле хăйне юраттарайчĕ.
Вăл авăнать пĕрмай пĕр çиле май.
Мана вара пĕрре те вăл курмарĕ –
Эп пултăм уншăн çук пулас...
Пуртă йăтса пыратăп ун патне –
Часах сана ваклатăп та!..
Ман йывăç пĕр сăмах чĕнмесĕр
Шалт! çеç йăванчĕ çиле май!

***

Тĕлĕнтерсе пăрахрĕç сар хĕрсем.
Вĕсем мĕн ку тĕнчере те мар.
Теме пĕлсен те пурпĕр ĕненмеççĕ –
Вĕсем, тен, чăн та, сывă мар?
Вĕсен черчен пуçĕсенче пĕр Турă.
Турă тăвать, иккен, ку тĕнчене!
Тĕнче мĕн улшăнмасть. Мĕнле вăл пулнă,
Çавăн пекех тăрать чăн шикленсе.
Хăçан, апла, пулса та ишĕлсе
Пĕтет-ха ку тĕнче, йăлт çылăхскер?
Хĕрсем каяççĕ чиркĕве – ан тив,
Унта вĕсем тупаççĕ хăйсене
Турра йăлт ĕненсе те пурăнмалăх...
Турри, тен, çук та мар пуль те, анчах
Ăçта-ха сан юлташ, атте-анне –
Мĕн-ма халь вĕсене эс ĕненместĕн?
Чун пăсăлсан çапла çав, куç курмасть.
Сăмса айне тĕксе парсан та суккăр!

Ёнен эсӗ хӑвна, эс юлташна пуҫ ҫап.
Тӑван ҫӗршыв вара сан, чӑн та, пулӗ!
Пӗр Турӑпа ҫеҫ юлтӑн эс паян,
Мӗнле чӑтса ирттерӗн ӗнтӗ халӗ?
Турри килсен те, килмесен те ҫук –
Ӑҫта кайса кӗрет халь ҫын хавалӗ?

* * *

Ҫумӑр, ҫумӑрлӑ, ҫумӑрчаклӑ...
Ах, епле эс аван та чаплак.
Чапӑл! ҫеҫ тутарса пыратӑп,
Эпӗ кам пулнине чухлап.
Эпӗ ҫумӑр ачи, ҫумӑрчаклӑ.
Ҫумӑртан та текех хӑрамас!
Парӑр халь мана пӗр сунчӑк –
Пурпӗрех эп пите кӑтартап!
Пит ҫине вӗтӗ ҫумӑр ҫӑвать,
Ҫав мана вӑтанмасӑр сават...
Ҫумӑр, ҫумӑрлӑ, ҫумӑрчаклӑ
Паянтан манӑн кун пуҫланать.

* * *

Теме ӗлкӗрмелле, тет, халӗ?
Ирпе ҫапатӑп кӗнеке.
Кӑнтӑрлапа хӗрсе кайса
Вулатӑп лекцисем тата...
Каҫпа вара каллех ҫынсем –
Ман каймалла выставкӑна.
Унта мана кӗтет Неҫҫи,
Хӑй ҫырмипе хӑпартланса.
Чӑнах та мар-и, ҫав ҫырма
Пире ҫӗклерӗ пит ҫӳле.
Ҫӳлтен-ҫӳлтен пӑхса тӑрсан,
Ҫырма та курӑнать ӗлккен.
Унта вара хӑй пӗр тӗнче!

Çав çырмара пурăннăçемĕн,
Тен, пулнă пулĕ пит чее...
Тен, çавăнпа та ĕлкĕретпĕр?
Эп ĕлкĕретĕп тем тума та!
Мĕншĕн тесен, çырма ман пур.
«Çырма» тесе çырса хурап та
Çырма пуçлап çырма çинчен...
Çав çырма пек атьсемĕр пулăр,
Чăваш çырми асамлă вырăн.

***

Хăваласа пыратпăр пурнăçа.
Пурнăç тени тарать кăна.
Ярса тытасшăн тăсрăм хам ывçа –
Çук, вырнаçмасть ку кустăрма!
Вăл çаврăнать кăна халь ман тавра.
Çаврăннăçем, мана та пуль çаврать?
Тăрса юлатăп варринче вара –
Татах та çавăрас тесе çаврап!
Эс ас тăватни, пĕчĕк чух пĕрре
Круççель эс ярăнтартăн уявра.
Епле аванччĕ ун чухне пĕрле –
Круççелĕ çаврăнатчĕ пин çавра.
Çавăн чухне ăнлантăм пĕр ăнлав,
Пуçа манне пуль халь те шăтарать,
Пулсам эс ху та пĕр çавра майлах –
Вара ку тĕнчене çавăрттаран!

***

Çуллана манса пыратăп.
Иртсе кайрĕç ăш кунсем...
Тунката çинче ларатăп,
Тĕнчене сăнанăçем...
Питĕ лайăх, ас тăватăп,

Каҫ енне кăшт сывалсан,
Хăвна Турă пек туятăн
Чечек евĕр сывласан...
Ҫавă ҫав, ҫурла шăлне
Кам ас тиврĕ каҫ енне?
Ман чĕре пуль касăлчĕ –
Кам мана халь асăнчĕ?

* * *

Ялти читальня. Шашкăлла вылятпăр
Хĕрсе кайса пĕр ачапа.
Пĕр-икĕ кĕнеке вулатпăр –
Телейлĕ хамăр пурнăҫпа...
Кăшт вăхăт иртрĕ. Эпĕр ватăлатпăр.
Халь тин каллех читальнăра.
Анчах та шашкăна манмастпăр.
Вулатпăр кĕнеке те хушăран.
Тавах сана, читальня! Ҫын эс турăн
Ачасене алран тытса пырса.
Халь тин пырса кĕрсен те Туррăн
Пăхаҫҫĕ кĕнекеҫĕсем куҫран.

* * *

Пур-ха, пур кĕркуннен пĕр тапхăр –
Пиҫсе ҫитнĕ самант темелле.
Ҫăкасем те тăраҫҫĕ капăр –
Ҫулҫине хăть татса илмелле!..
Тепĕр чух ҫил тататъ те пулĕ,
Ҫавăрать ҫул ҫинче пĕрмай.
Ҫул ҫинче вĕсем халь тем чухлĕ –
Йывăҫҫи ҫинче ним те юлман!
Ăт, ҫапла ҫав кĕр кунĕн тумĕ
Пĕрре пур та тепре ҫукрах...
Ах, ачам, санпала тем пулчĕ –
Эс тăратăн ҫăка майлăрах!

* * *

Çут çанталăкăн алли пуль
Хăй сăрлать ку картина...
Çилĕ вĕрчĕ темĕн чуль –
Сăрăланчĕ сывлăшра.
Юхрĕ шывĕ çырма тăрăх –
Пăхнăçем куç ялтăрать.
Ку художник чаплă ăрăм –
Ăсталать те курăнать.
Çут çанталăкăн пин сăрă
Хăй тĕллĕнех тупăнать.

* * *

Эп тухатăп санпа тепĕр хут сунара.
Çуккă пирĕн пăшал, çуккă йытă...
Пурпĕрех! Чĕрепе эп туятăп хама хăнара –
Хуçисем халь мулкач та хур-кайăк.
Халь мĕнпе сăйласа савăнтарăн мана,
Нихăçан та тытман ман мулкачăм?
Мĕн тесе каласа та хăварăн тата
Кӳлĕ çийĕн вĕçен хур-кайăк?
Пур мулкачăн йĕрри, пур хур-кайăк сасси –
Çавсене те курса тăранатăп!
Тавтапуç тăвансем, сире пултăр тавсси!
Эпĕ халĕ татах пурăнатăп!

* * *

Мĕн-ма хĕрарăм тенисем
Пуçа кĕреççĕ самаях?
Тахçантанпах та тенкисем
Куçа туртаççĕ пĕрмаях...
Тенки те кăкăрĕ ташлать,
Вăшлаттарса та утнăçем.

Мĕн-ма-ха чунăм ман чупать,
Çав тенкĕ пек чĕтреннĕçем?
Мĕн-ма тесен ун çумĕнче
Арçын тупать пĕртен пĕр канлĕх...
Эх, пуçăма таясчĕ те,
Сиксе каясчĕ кăкăр пек!

* * *

Çил çинче эп тăратăп халĕ.
Çил тени, кĕрхи çил, аван мар.
Çил çинче тăнă чух аса килчĕ
Тăван кил те картиш, амбар...
Пурте пур ман килте, пурте лайăх.
Сивĕ чух ăшă пÿрт пит аван.
Ир енче сăрхăнса кĕрет çутă –
Каçпала та çав çутă унтах!
Çавăнпа та, шутлап, манăн çуртăм
Çут валли халĕ тунă пекех.
Ун патне эп каллех ăнтăлатăп
Сивĕ çил çинче тăнă чухне...

* * *

Ахăр çил çавăрттарчĕ, астарчĕ
Чÿрече умĕнчи йывăçа.
Пĕр кана сивĕ çумăр хупларĕ –
Çук, памарĕ мана çывăрма.
Эп хама капитан пек туятăп.
Пирĕн çурт пĕр пĕччен хăй карап.
Унпала эп ишсе пыратăп,
Тăвăлтан та эп халь хăрамас.
Ман кунта халь кил-йыш та тăванăм –
Çывăраççĕ вĕсем вилнĕ пек...
Эп вĕсемшĕн, паллах, пăшăрхантăм –
Хамшăн эп халь нимрен хăрамас!
Çавăрттартăр çил-тăвăл, алхастăр...

Пурпĕрех вăл пире тивеймест!
Ман пӳртре çывăраççĕ пĕр харăс
Ик ача халь тин выртнă пекех.
Çук вара, ман карапăм пĕтмен-ха,
Çак çĕр çумĕ ун пристань пулать.
Çил темле ашкăрсан та пин майлă
Манăн çурт çавăнтах лăпчăнать...

***

Кĕрхи лăпкă кунăм
Сăрхăнса кĕрет.
Эп ларатăп, чунăм,
Эп сана кĕтеп...
Акă, кĕчĕ çутă
Пĕр чӳречерен.
Эсĕ пулĕ çуттăн
Кĕтĕн пӳлĕме...
Эс пăхса тухатăн
Пӳрт ăш-чиккине.
Пĕтĕмпех куратăн
Мĕн çитменнине...
Санпала пит лайăх –
Кил-ха çуттăнрах!
Эс мана шыратăн...
Эпĕ вĕт кунтах!

***

Кая юлса пырать ман пурнăç.
Тĕнче кайса таçта,.. малта
Çап-çуттăн ялтăрать, пыруçăн
Тата хитре пек курăнать...
Мĕн-ма кая юлса пыратăн?
Пиншер çул иртрĕ пуль, тахçан

Пуçламăшне туса хуман та –
Ларатăп çавăнтах паян.
Пиншер çулсем иртсен те иртчĕр –
Ман çав ĕçе вĕт тумаллах!
Тен, çавăнпа çак кĕрхи кун
Ман çул пуçламăшĕ пулать.

* * *

Поэзи халь каллех, ак, ӳсрĕ
Ман куç умне пĕр тĕм пулса.
Сивĕ çиле вăл лайăх тӳсрĕ,
Çулçисенчен кăвайт туса.
Çунать пĕр тĕм поэзи евĕр,
Калать пуль хăйĕн сăмахне...
Çур кунĕсем килсен, ак, тепĕр
Калать сăмах – урăххине.

* * *

Пуç çапрăм эп сана, çут уйăм,
Пус тăршшипе те утнă чух.
Сан асапна та эпĕ туйрăм,
Пур-çук тырра пуçтарнăçем...
Мĕн ачаран кунта эп утнă
Вăй çитнĕ таранах пĕрмай.
Ыраш та вырнă, тулă акнă –
Эп пурăннă çак анапа...
Мана вăл туйăннă Тур пек.
Тен, çавăнпа ăна пуç çапнă
Тупа туса пĕрле пулма
Мĕн виличчен çак çут уйпа.

* * *

Турă çинчен шутлатăп эпĕ.
Турă ман пур-и, вăл ăçта?
Кирек мĕскер, тем каласан та –

Сисетĕп – пур вăл ман ăшра!
Çапах чăваш, мĕнле калать-ха,
Тытса пăхмасăр ĕненмест.
Апла пулсан, каçпа тухса та
Пăхса эс тăр-ха уçлăха...
Епле унта тĕнче ялтравлă,
Епле çунать вăл сан чунра!..
Кăштах татах вăйсем тупсан та
Вĕçсе каятăн пуль унта?
Е пĕр тата пилеш çырлийĕ
Турă пекех вĕт туйăнать.
Ăна татса çисе пăхсан та
Ай, йӳçĕ те... турăлатать.
Турă тени, таçта та пур-тăр.
Турă тени пур халăхра!
Çапла, çапла, ан тив эс тенĕ
Ху юлташна, хурăнташна.
Ун туприне ан тĕкĕн тенĕ,
Тек ан пăхсам ют арăма...
Çапла тесе каланă халăх
Вăл Турăран та аслăрах!
Малтан вĕт халăхĕ пулса та,
Турри килсе кăшт каярах...
Тен, çавăнпа çӳлти Турра
Эпир пĕлетпĕр хамăрта.

***

Мĕнле-ха, тетĕп, пурнăç сĕмĕ
Шуса кĕрет-ха юн шайне?
Эп ырă тусанах çав паллă
Кăшт çырăнать пуль ман ӳте?
Мĕнле-ха унсăр кун пулать-ха,
Мĕнле ӳсет-ха ку тĕнче?
Мĕн ĕмĕрсем хушши мĕн ырă
Йăлт çырăнать пуль чун шайне?

Эпир, тен, ҫавӑнпа ҫеҫ Туррӑн
Пӑхса тӑратпӑр халь пӗрле.
Мӗншӗн тесен эпир пӗлетпӗр –
Ҫав Турӑ пирӗн чӗрере!

* * *

Тринкки-транкки! сиккелеҫҫӗ,
Пӗчӗк ҫын пек, сар хӗрсем.
Мӗн-ха тетӗр кукалеҫҫӗ
Ҫавна курнӑ качча́сем?
Сив ҫил мар ҫав, савӑк кулӑ
Сиктерет халь хӗрсене.
Ҫавна курнӑ каччӑ куҫӗ
Савӑнать – тӗнче! тесе.

* * *

Палан, палан, паланӑм...
Пӗр хурӑн пур тата...
Кунта палан ҫӗр-шывӗ –
Эпир туса ӑна.
Ача чухнех аванччӗ
Пӗчӗк палан лартма.
Ак, халь курса эс тӑр-ха
Паланӑн ҫӗршывне.
Ҫав палансен ҫырлийӗ
Хӗвел пек хӗрелет.
Тахҫан вӗсен ҫеҫкийӗ –
Ҫӑва ас илтерет...
Палан, палан, паланӑм...
Пӗр хурӑн пур тата...
Тен, ҫавӑнпа ман чунӑм
Палан пекех таса!

* * *

Чӗлтӗртетсе тӑраҫҫӗ

Сап-сарă çулçăсем.
Халь-халь талса ӳкессĕн
Турат вĕçĕнчисем...
Хăш-пĕрĕ талнă ӳкнĕ –
Халь тин выртать çĕрте!
Сив çил килсе вĕрсен те
Вĕçеççĕ ман çине...
Вĕлтĕртетсе пурнаççĕ
Сап-сарă çулçăсем.
Вĕсемпеле чĕтреççĕ
Чунри ман хĕлĕхсем.

* * *

Хĕвел ӳкрĕ йывăç витĕр...
Йывăç çуттăн курăнать.
Чиркӳре те кун пек çутă,
Кун пек çутă курăнмасть.
Çутă халь хăй пулчĕ йывăç –
Ун çулçи – хĕвел çути!
Çавăнпа та сарă йывăç
Чиркӳ евĕр пулчĕ-ши?
Эп унта пырса кĕретĕп,
Кĕл тăватăп майĕпен.
Мĕн тума, çавна пĕлен-тĕр,
Хĕвел ӳкрĕ çĕр çине!

* * *

Эп курма вĕрентĕм
Çакă тĕнчене.
Кунта тем те пур мĕн –
Пур кунта чĕре!
Çакă чĕрере пуль
Ку тĕнче выртать.
Мĕн вăл халь курас, тет,
Çавă курăнать.

Пур кунта ҫут чӑрӑш,
Пур ачаш пилеш.
Паланпа тӗл пултӑм –
Вӑл та пит ачаш!

***

Таҫтан юна кӗрсе пырать Бичурин...
Ӑҫта вӑл пулнӑ ӗлӗкрех?
Пирӗн юнрах, пиртех вӑл пулнӑ –
Халь тин куратпӑр хамӑртах!
Килех Бичурин, кил кунта,
Вӑрат пирте Китай юнне.
Китай пулса эпир ҫӳренӗ
Тибет сӑрт-тӑвӗ патӗнче.
Халь тин тӑран ҫав Китай майлӑ
Типнер[1] ҫынни мӑйӗхӗпе...
Эпир те мар-и унӑн хыҫҫӑн
Тухатпӑр ҫакӑ уҫлӑха?
Каллех Китай таран ҫӳретпӗр
Чӑваш юнне сарас тесе...

***

Шур хурӑн ҫутипе ҫӳретӗп,
Хӑпартланса та ҫуталса.
Ҫуркуннепе, эпӗ пӗлетӗп,
Пӗрремӗш хут ҫулҫӑланса...

Унтанпала та вӑхӑт иртрӗ.
Ак, ҫитрӗ кӗркунне татах.

---

[1] Типнер – малая родина Н.Я.Бичурина.

Ман йывăçăн та вăхăт çитрĕ –
Вăл халь, чăнах, çурта майлах!

Вăл ирĕн-касăн хăвăрт çунчĕ –
Çунса та кайрĕ самантрах!
Çавăнтанпа ман ĕмĕт сӳнчĕ –
Пĕрех эп пур çав çуртарах!

* * *
Халăхăм ман, халь ăçта эс?
Пулнă пулас эс тахçан...
Мĕншĕн хăвна эс пытартăн,
Мĕншĕн сăмах каламан?

Сан пек халь ман чăн пулас-и?
Кĕрр! çеç кĕрлетĕр чăваш!
Ун сăмахне итлекенĕ
Хăй те чăн пулĕ чăваш...

Халăхăм ман, халь ăçта эс?
Мĕншĕн тăратăн шăп?
Эпĕ сан пек те пулсан-и,
Хам та пулатăп лăп!

* * *
Ёштеленсе çӳренĕ чух
Пĕр вăхăт чарăнса тăратăн.
Епле аван мĕн кĕрхи кун –
Ăçта, камран эсĕ таратăн?
Кун пек чухне лăплан-ха кăшт.
Кăшт пăхкала сар çулçă майлă.
Унтан алран вĕçерĕн вăшт! –
Çилпе вĕçме те питĕ лайăх!
Çапла, çапла кăшт чарăнса
Эс сывласа илсем пăртакçă.

Тĕнче хăех пĕлет мĕн-ма
Хăйне вăл кăтартать чаракçăн.

***

Шăлса кайрăн пулать сар çулçа?
Хура çĕр тăрса юлчĕ сан хыççăн.
Сан пекех эп кунта халь пулса –
Эп хуплармăм çĕре сарă çулçăн...
Мĕн тума эс çĕре халь уçса,
Сивĕре шăнтас терĕн-и халĕ?
Хуçа пек эс кăштах шутласа,
Йĕркелес-ха тесе-ши хăтланнă?
Апăрша, юрамасть пуль ун пек
Турăран эсĕ урăх иртеймĕн!
Сарса панă çулçа çил кăна пĕлейрет –
Хăш тĕле пăрахать-ха ирçемĕн?

ТУПМАЛЛИ

1. Кил картинче пĕр ватă тополь.....3
2. Ир ҫинчи хĕвел.....4
3. Тăван кил те темшĕн ют.....4
4. Енчен те эс, ывăлăм ман.....5
5. Чăвашăн чунĕ упранать.....5
6. Ҫурхи каҫ ҫывăрать кайăк майлă.....6
7. Куҫ илейми пăхатăп.....6
8. Ҫырмара пĕр шуйттан та юлман.....7
9. Ҫĕр ҫийĕпе вĕҫме пит лайăх.....8
10. Ҫĕн ҫул хапхине те уҫса.....9
11. Тĕлĕнмелле пĕр пысăк чăнлăх.....9
12. Сана эп таҫта та куртăм.....10
13. Тахҫан пĕчĕк чух ҫĕн ҫул умĕн.....11
14. Мĕн-ма аса килчĕ пулĕ.....12
15. Кам чунĕ манра вылянать-ши.....12
16. Пĕр куҫ йăлтăртатрĕ.....12
17. Никам та ҫук ман ҫул ҫинче.....13
18. Пурнăҫ тени тĕлпулуллă.....13
19. Тута калуллă предложени.....13
20. Тăван чĕлхепе пуплемесĕр.....14
21. Ăҫта карташҫă.....15
22. Тепре пăхса илетĕп.....15
23. Виҫ чăрăш – пĕр хӳтĕ хӳшĕ.....16
24. Тул ҫутăлать.....16
25. Кĕтме пит лайăх.....16
26. Чун пек ялтăран тӳпене.....17
27. Турă пире йывăҫ лартса панăччĕ.....17
28. Тĕтреллĕ ир тĕтрелентерчĕ.....18
29. Пурнăҫ нумай та юлмарĕ.....18
30. Ҫырлаллă ҫанталăк. Хĕвеллĕ.....19
31. Ҫара ура кĕлли ыратрĕ.....20

32. Хӗвел кӗрет хăватлăн.....20
33. Шоколадкă тĕслĕ пĕр хĕрарăм.....21
34 Хура вăрман ҫийĕн шурă-шурă уйăх.....21
35. Пĕр тупсăм тупрăм, пурнăҫа.....22
36. Хĕвел пăхать хаваслăн.....22
37. Чиркӳ умĕнче тăратăп.....23
38. Хĕрсем кулса пыраҫҫĕ.....23
39. Каллех тинклетме пуҫларĕ.....24
40. Тĕнче куҫран пăхса юрларĕ.....25
41. Февраль пуҫланчĕ. Нарăс уйăх.....25
42. Пăрлаклă тĕнче тăрăх.....26
43. Пĕр пĕчĕк утрав.....26
44. Чипер кăна ăста хĕрсем.....27
45. Тур тунă пек шур улмасем!.....27
46. Ҫӳлтен эп шурă юр пек ҫурăм.....27
47. Ҫак самантра майĕпен.....28
48. Юр ҫăвать, юр ҫăвать.....28
49. Ҫемҫе ҫанталăк ҫемҫетет ҫав.....28
50. Пырса кĕр те – никам курман евĕр.....29
51. Шырарăм, шырарăм, шырарăм.....29
52. Кăчкă темччен кĕтсе ларчĕ.....30
53. Хĕвел тени хăна пекрех-ши.....30
54. Ыйтулать тĕнче. Мĕн ыйтать.....31
55. Вăрман шавлать.....31
56. Йĕкелне ҫӳлтен пăрахрĕ.....32
57. Мĕн ҫинчен каласшăн пултăн.....32
58. Миҫе хутчен эп йăнăшман пуль.....33
59. Эп сан пата кăшт ҫывхарсаччĕ.....33
60. Юр айĕнчен пек шăтса тухрĕ.....34
61. Чик-чик! ҫеҫ чĕриклетрĕ.....35
62. Ман тĕнче, тин ăнлантăм.....35
63. Хĕвел тухать-ха... Савăнатăп.....36
64. Эп пĕр сăмах та калаймарăм.....36
65. Сăпайлăн, сăпайлăн кăшт сĕртĕнчĕ пуль.....37
66. Хĕрсем тăраҫҫĕ ҫил ҫинче.....38

67. Нимпех те паллă мар тěнче........40
68. Пулать-ха мăйăр. Çуккă мар........40
69. Сар чечеклě çěр........41
70. Ума чупса тухрě........41
71. Эпир тахçан иленнě........42
72. Чăваш тумěн кунě........43
73. Çěлен çырми çěлен пек........43
74. Аçа чутах çапмарě........44
75. Сан пата чылайччен ăнтăлатăп........45
76. Пěр çавра çине пăхса........46
77. Симěс çырмаллă тěнче........46
78. Пěтмен иккен вăл, Вавилон........47
79. Татăттăм татах эп........47
80. Çавра çинчен пуç çавăратăп........48
81. Çěр çунатлă хурăн........48
82. Ушкăнланса ӳсеççě йывăççем........49
83. Çеçпěлçěсем, çеçпěлçěсем........49
84. Хăва ӳсе ларнă шыв хěрри........50
85. Тăр-тăр-рр! илтěнкелерě........50
86. Утти ман, утти, атьсемěр........51
87. Мěскер тапса тăрать шалтан........51
88. Çулçă сăмахлă хурăнпа........52
89. Кая юлса çитрěм пуль........53
90. Укçа пама пултăм эпě........54
91. Тěнчере алхасать пěр пушар........54
92. Тěлěнмелле хаваслăх пур........54
93. Сиренлě çул. Ик айккипе сирень........55
94. Çăлма никам та шутламасть-тěр........55
95. Авалхи шăпчăксем юр юрлаççě........56
96. Эп кун пек сукмаксем........56
97. Çěр çисе ӳсе çитсессěн........57
98. Чун тени – мěнле çук пултăр........57
99. Сиренлě çул. Ача чухнех........58
100. Пилеш палăра пуçларě........58
101. Кěтсе ларатăп... Мěн тесе........59

102. Ёнерхи тăвăла эс курмарăн........................................................59
103. Çĕр çырли тапса тухнă, пĕлетри.................................................59
104. Кала-ха, кала... Каламастăн........................................................60
105. Тĕрлĕрен пулать çырма...............................................................60
106. Сарă, сарă, çутă чечексем...........................................................61
107. Пĕр ватă çын...................................................................................61
108. Тата мĕн куртăм-ха, тăванăм.......................................................62
109. Çанталăк пек эс тĕрĕле..................................................................62
110. Ним çинчен те ан шутла................................................................63
111. Ну, çиттĕр, çиттĕр.........................................................................63
112. Эп çырма пăрахрăм........................................................................63
113. Тап-таса çут уйĕ.............................................................................64
114. Ах, вăрттăн шухăшлă чăвашăм...................................................65
115. Çавăрттартăн эс, кăшт çавăрттартăн..........................................65
116. Ытла та хăвăрт ӳснĕ.......................................................................66
117. Вĕттĕн-вĕттĕн çумăр çăвать.........................................................66
118. Чĕмпĕрленчĕç хĕрсем, хитреленчĕç.............................................66
119. Евĕрлерĕм сана эп, тăванăм...........................................................67
120. Çап-çут ана... Утса килентĕм........................................................67
121. Тĕлĕнмелле пĕр пулăм....................................................................68
122. Манăн пурнăç пĕр çавра кăна........................................................69
123. Ĕлĕкхи пек каллех пиçеççĕ............................................................69
124. Паянтанпа çырма пуçлатăп............................................................70
125. Иртет çав вăхăт... Çак самант........................................................70
126. Кĕрхи кунсем килсе çитсен...........................................................71
127. Тăхти пекех тăхтамалла.................................................................72
128. Чечексем, юлашки чечексем..........................................................72
129. Хĕвел ури пуль талса ӳкрĕ.............................................................73
130. Çумăр çума пуçларĕ........................................................................73
131. Хĕпĕртесе пăхать хĕвел..................................................................74
132. Пĕр хĕрача çинчен шутлатăп.........................................................75
133. Тĕнче çути пуль таврăнать.............................................................75
134. Пĕр кăмăл тупнă чух пĕрле............................................................75
135. Çĕр тĕрлĕ тĕл пулу, çĕршер ăсчах..................................................76
136. Чечексем ӳссе ларнă чылай............................................................76

137. Шухăшламалăх пур чухне....................................................77
138. Ниçта кайса кĕме те çук....................................................77
139. Çамрăк чухне аванччĕ....................................................78
140. Ăçтан-ха курма пĕлетĕн....................................................78
141. Çĕр çунать....................................................79
142. Тĕлĕнмелле пĕр пĕчĕк тупсăм....................................................79
143. Утнăçемĕн килчĕ кун çути....................................................80
144. Пĕр уçăлу пур çакăнта....................................................80
145. Çутатайрĕ мана кĕрхи кун....................................................80
146. Çак хĕр çинчен мĕн калама....................................................81
147. Пысăк, чаплă мăн çынсем....................................................81
148. Питĕ ăмăр кунччĕ....................................................82
149. Ик айккипе сап-сарă....................................................83
150. Тĕттĕм яка пĕлĕтрен шуса тухрĕ....................................................83
151. Пăхать, пăхать таçтан асамлăн....................................................84
152. Ку тĕнчене улăштарма пулать пуль....................................................84
153. Пĕрре кăна санпа çураçтарасчĕ....................................................85
154. Тĕлĕнтерсе пăрахрĕç сар хĕрсем....................................................85
155. Çумăр, çумăрлă, çумăрчаклă....................................................86
156. Теме ĕлкĕрмелле, тет, халĕ....................................................86
157. Хăваласа пыратпăр пурнăçа....................................................87
158. Çуллана манса пыратăп....................................................87
159. Ялти читальня. Шашкăлла вылятпăр....................................................88
160. Пур-ха, пур кĕркуннен пĕр тапхăр....................................................88
161. Çут çанталăкăн алли пуль....................................................89
162. Эп тухатăп санпа тепĕр хут сунара....................................................89
163. Мĕн-ма хĕрарăм тенисем....................................................89
164. Çил çинче эп тăратăп халĕ....................................................90
165. Ахăр çил çавăрттарчĕ, астарчĕ....................................................90
166. Кĕрхи лăпкă кунăм....................................................91
167. Кая юлса пырать ман пурнăç....................................................91
168. Поэзи халь каллех, ак, ӳсрĕ....................................................92
169. Пуç çапрăм эп сана, çут уйăм....................................................92
170. Турă çинчен шутлатăп эпĕ....................................................92
171. Мĕнле-ха, тетĕп, пурнăç сĕмĕ....................................................93

172. Тринкки-транкки! сиккелеççĕ....................................................94
173. Палан, палан, паланăм..............................................................97
174. Чĕлтĕртетсе тăраççĕ..................................................................94
175. Хĕвел ӳкрĕ йывăç витĕр............................................................95
176. Эп курма вĕрентĕм.....................................................................95
177. Таçтан юна кĕрсе пырать Бичурин...........................................96
178. Шур хурăн çутипе çӳретĕп........................................................96
179. Халăхăм ман, халь ăçта эс.........................................................97
180. Ĕштеленсе çӳренĕ чух...............................................................97
181. Шăлса кайрăн пулать сар çулçа................................................98

**Желтов Михаил Павлович**

# Ҫӑлӑнӑҫ утӑмӗсем

## Шаги спасения

## Стихи на чувашском языке

Печать принтерная
Бумага принтерная
Тираж 20 экз.
Самиздат «Семья»